Г. КУДРЯШОВ

ТĔН ТĔШМĔШЛĔХĔ тата УНПА КĔРЕШЕССИ

Чăвашиздат—1970

Г. КУДРЯШОВ

ТЁН ТЁШМЁШЛЁХЁ
тата
УНПА КЁРЕШЕССИ

ЧĂВАШ АССР КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1970

Пирĕн республикăра христиансемпе мусульмансен тĕн юлашкисемпе пĕрлех чăвашсен авалхи тĕн юлашкийĕсем те халичченех сыхланса юлнă. Турра ĕненекен çынсен ăстăнĕнче çак тĕшмĕшлĕх вара христиансен ĕненĕвĕсемпе тачă хутшăнса кайнă. Çавăнпа та ĕнтĕ турра ĕненекен чăваш çыннин тавракурăмĕ икĕ тĕрлĕ ĕненӳрен килет. Турра пуççапакансенчен нумайăшĕ язычествăран та хăтăлса çитеймен, православи тĕнне чăннипех ĕненекенсен шутне те кĕреймен. Çапла вара, турра ĕненекен паянхи чăваш çынни çурма язычник та, христианин та шутланать. Ку уйрăмлăхсене шута илмесĕр халăх хушшинче наукăллă-атеизмлă ĕçе ăнăçлă туса пыма йывăр. Çак ыйтусем çинче автор кĕнекере тĕплĕн чарăнса тăрать, атеизм ĕçĕнчи пропагандистсемпе агитаторсене тĕн тĕшмĕшлĕхĕпе кĕрешес ĕçре усăллă канашсем парать.

1—5—8
17—70М

УМСĂМАХ

Çирĕммĕш ĕмĕр—наукăпа техника тунă тĕлĕнмелле чаплă ситĕнӳсен ĕмĕрĕ. Çак ситĕнӳсене турă мар, этем хăйĕн ăстăнĕпе, хăйĕн аллипе тунă. Çавна май пирĕн ĕмĕр сынни наукăпа техника çинчен, космос, атом, электроника, кибернетика, автоматика çинчен ытларах пĕлме тăрăшать, ку темăпа çырнă кĕнекесене тимлесе вулать. Çакăн пек ĕнтĕ совет сыннисен — уйрăмах самрăк ăрăвăн — хальхи тавракурăме.

Паянхи кун шайĕнчен юлса пыраканнине пурнăç хăех таптать, путлантарать. Этеме сиен кӳрекен тĕн тĕшмĕшлĕхĕ те çавăн пекех майĕпен пĕтсе пырать. Апла пулсан, мĕне кирлĕ-ха ĕнтĕ тĕн пирки сăмах хускатма, тейĕç хăшпĕр вулакансем. Кунта çакна шута илмелле: тĕн тĕшмĕшлĕхĕн кунĕсем шутлă юлчĕç пулин те, вăл хăй тĕллĕнех пĕтсе ларасса кĕтме кирлĕ мар. Унăн тымарĕсем халлĕхе чылай таран-ха. Вĕсемпе çине тăрса кĕрешмесен, ку ĕçре татăклă улшăнусем тума çук.

Ку кĕнекере эпир авалхи тĕн тĕшмĕшлĕхĕпе, урăхла каласан «язычество»[1] юлашкийĕсемпе, тĕплĕн те çине тăрса кĕрешмелли çинчен калаçу пуçарасшăн.

Пирĕн республикăри хăшпĕр вырăнсенче чăвашсен авалхи тĕн юлашкийĕсем халичченех сыхланса юлнă. Турра ĕненекен çынсен ăстăнĕнче çак тĕшмĕшлĕх вара

---

[1] Наукăллă литературăра авалхи тĕн тĕшмĕшлĕхне «язычество» юлашкисем тесçĕ. «Язычество» сăмаха наукалла термин тесе шутлама кирлĕ мар. Ана христианла миссионерсен кĕнекисемпе ытти тĕн кĕнекисенчен илнĕ. «Язычество» сăмах литературăна кĕрсе юлнине шута илсе çех Совет влаçĕн çулĕсенче те чылай тĕпчевçĕсем христианла тата мусульманла тĕнсен уйăнхи тĕрлĕ йăхсен тĕнĕсене çав сăмахпах палăртаççĕ. Çавна май «язычество» сăмахпа меллĕ пулнишĕн çеç усă кураççĕ. (И. И. Скворцов-Степанов. Суйласа илнĕ атеизмлă произведенисем, 434—435 страница.)

христиансен ĕненĕвĕсемпе тачă хутшăнса кайнă. Çавăнпа ĕнтĕ турра ĕненекен чăваш çынпин тавракурăмĕ икĕ тĕрлĕ ĕненӳрен килет. Турра пуççапакансенчен нумайăшĕ язычествăран та хăтăлса çитеймен, православи тĕнне чăнпипех ĕнекенсен шутне те кĕреймен. Çапла вара, турра ĕненекĕн паянхи чăваш çынни вăл çурма язычник та, çурма христианин та шутланать. Çака ĕнтĕ турра ĕненекен çынсен тĕшмĕшлĕхĕн паянхи уйрăмлăхĕ пулса тăрать. Ана шута илмесĕр халăх хушшинче наукăллă-атеизмлă ĕçе ăнăçлă туса пыма çук.

АТЕИЗМ ÇĔНТЕРĔВĔН ТАПХĂРĔСЕМ

Октябрьти социализмлă Аслă революци хыççăнхи политикăллă, социаллă тата культурăллă пысăк улшăнусене кура совет çыннисем массăллăн турра ĕненме пăрахрĕç.

50 çул хушшинче атеизмлă юхăмра чылай пысăк тапхăрсем пулса иртрĕç.

Пĕрремĕш тапхăр 1917 çултан пуçласа 30-мĕш çулсен çуррине çити — е пирĕн çĕршывра социализм туса çитериччен — тăсăлнă.

Ку тапхăрта Чăваш çĕршывĕнче тĕне хирĕç кĕрешес ĕç уйрăм условисенче пулса пынă. Атеизмлă ĕçе ун чухне пачах хутла пĕлмен е сахал вĕреннĕ çынсем хушшинче ирттерме тивнĕ. Çавăнпа атеистсем, ку ĕçе массăсем хушшинче анлăрах та ăнăçлăрах туса пырас тесе, тĕрлĕ меслетсемпе усă курнă.

Асăннă тапхăрта Чăваш çĕршывĕнче христианла, мусульманла, язычествăлла тата ытти тĕрлĕ ĕненӳсемпе тĕшмĕшлĕхсем пурри атеизмлă юхăм умне сахал мар йывăрлăхсем кăларса тăратнă. Тĕне хирĕç пыракан кĕрешӳ час-часах хăшпĕр çынсен нациллĕ туйăмĕсене пырса тивнĕ. Çавăнпа та тĕне хирĕç кĕрешес тата халăха интернационаллă воспитани парас ĕçсене пĕр вăхăтра туса пыма тивнĕ.

Чăвашсем хушшинче атеизмлă воспитани парас ĕçри тепĕр уйрăмлăх вăл — пирĕн таврара мĕн авалтанпах чиркӳсемпе мăнастирсем йышлă пулни. Сăмахран, 1918 çул пуçланнă тĕле Чăваш çĕршывĕнче 338 чиркӳ, вăл шутра 7 мăнастир, кĕлĕ тумалли пĕр çурт, 38 мечĕт ĕçленĕ. Пилĕк пин çын пурăннă. Шупашкарта кăна 17 чиркӳпе темиçе мăнастир пулнă[1]. Чиркӳ çыннисем пине яхăн шутланнă, вĕсем халăха

[1] Чăваш АССР Государство тĕп архивĕ, 202 ф., 2-мĕш оп., 762 д., 53 л.

тĕн сĕрĕмĕпе минретнĕ. Октябрьти революци хыççăн вĕсенчен нумайăшĕ Совет влаçне хирĕç тăнă. Çакăн пек уйрăм условисенче ĕçлеме тивнĕ ĕнтĕ атеистсене пĕрремĕш тапхăрта.

Ку йывăрлăхсем пирĕн патра кăна мар, РСФСРти ытти республикăсенче те пулнă. Çакă вăл нациллĕ республикăсенчи массăсем хушшинче атеизмлă ĕçе ыранти уйрăмлăхсене шута илсе туса пыма хушнă.

Çакнашкал условисенче советлă атеизм кунсерен вăй илсе пынă. Владимир Ильич Ленин çĕршывра атеизмлă ĕçсем мĕнле пынипе куллен интересленнĕ. Октябрьти революци тăватă çул тултарни çинчен тухса каланă сăмахра вăл çĕршывра тĕне хирĕç кĕрешес ĕçе пысăк хак панă. Эпир тĕнпе кĕрешнĕ тата çине тăрсах кĕрешетпĕр те [1], тенĕ.

В. И. Ленинăн Октябрьти революци хыççăн çырнă произведенийĕсем тата вăл тухса каланă сăмахсем КПССăн тĕн пирки тăракан политикин теориллĕ никĕсне хывас ĕçре пысăк вырăн йышăннă. Вĕсен шутне «Пĕтĕм Российăри ĕçхĕрарăмĕсен I съездĕнче тухса калани», «Çамрăксен союзĕсен задачисем», «Кĕрешекен материализмăн пĕлтерĕшĕ» тата ытти произведенисем те кĕреççĕ.

ССР Союзĕнчи тĕн тĕшмĕшлĕхĕпе кĕрешмелли ленинла программăна Совет влаçĕн малтанхи декречĕсенче, партин иккĕмĕш Программинче, РКП(б) VIII съезчĕ «Ялти политикăллă пропаганда тата культурăпа çутĕç çинчен» йышăннă резолюцире, РКП(б) Центральнăй Комитечĕн «Тĕне хирĕçле пропаганда тăвасси тата Программăн 13-мĕш пунктне пăсни çинчен» ятлă постановленийĕнче, партин X, XII, XIV тата ытти съезчĕсен решенийĕсенче палăртнă.

Ленинăн тĕне хирĕçле идейисене малалла аталантарас, вĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çулпуçăн соратникĕсем, партин паллă деятелĕсем — М. И. Калинин, Н. К. Крупская, В. Д. Бонч-Бруевич, А. В. Луначарский, И. И. Скворцов-Степанов, Е. М. Ярославский, П. А. Красиков тата ытти юлташсем пысăк ĕçсем туса ирттернĕ.

Ленинла атеизм пуянлăхĕ пирĕншĕн паян кун та

---

[1] В. И. Ленин. Соч. тулли пухăвĕ, 44 т., 146 стр. пăхăр.

шанчăклă компас, атеизмлă воспитани ĕçĕнче теорилле çирĕп никĕс пулса тăрать. Çавна май В. И. Ленин чиркӳпе тĕн пирки вĕрентнĕ хăшпĕр принципсене кĕскен кăтартса хăварас килет.

Пĕрремĕшĕ. Тĕне çĕнтермелли ленинла программăн тĕп идейи вăл атеизмлă пропагандăна экономикăпа политика ыйтăвĕсемпе тата культурăллă революцин тĕп задачисемпе тачă çыхăнтарни пулса тăрать. В. И. Ленин тĕне хирĕç кĕрешес ĕçе социализм строительствин конкретлă ĕçĕсемпе çыхăнтарма кирлине палăртнă. «Тĕнпе кĕрешни вăл социализмшăн кĕрешни пулать» — акă епле лозунг тăнă ун чухне атеистсем умĕнче.

Иккĕмĕшĕ. Коммунизмлă воспитание атеизм ĕçĕпе куллен тата тачă çыхăнтарса туса пыма кирли.

Виççĕмĕшĕ. «Тĕне хирĕç кĕрешессине наука вĕрентнĕ пек тумалла»[1] — акă вăл тĕнпе кĕрешмелли пысăк пĕлтерĕшлĕ ленинла принцип. Тĕн тĕшмĕшлĕхĕпе ăнăçлă кĕрешес тесен, тĕн мĕнле пуçланса кайнин, массăсем турра мĕншĕн ĕненнин сăлтавĕсене наука вĕрентнĕ пек ăнлантарса памалла, турă кĕнекисенче тĕнчепе этемлĕх çинчен çырнисем суя пулнине тĕплĕн критикламелле. Ку тĕлĕшпе вара паянхи наукăн пур çитĕнĕвĕсемпе те анлă усă курмалла.

Тăваттăмĕшĕ. Атеизмлă пропагандăн ленинла пысăк пĕлтерĕшлĕ принципĕсенчен пĕри вăл — турра ĕненекенсен тĕн туйăмĕсене кӳрентерме юраманнине пĕлтерекен принцип. Кунта ĕнтĕ, паллах, тĕнпе витĕнсе обществăна хирĕçле ĕçсем тăвакан çынсем пирки мар, турра ĕненекенсен пысăк пайĕ шутланакан пирĕн ĕçченсем çинчен сăмах пырать.

В. И. Ленин палăртса хунă çак тĕп принципсем партипе комсомол тата ытти обществăллă организацисем тĕне хирĕç туса пыракан ĕçсенчи тĕп никĕссем пулса тăчĕç.

Тĕн çĕнĕ общество тума чăрмантарнине, унпа çине тăрса кĕрешме кирлине совет çыннисем революци вăхăтĕнче те, граждан вăрçи çулĕсенче те, социализм строительствин мирлĕ тапхăрĕнче те уççăнах курчĕç. Культурăллă революци ĕççыннисене тĕн сĕрĕмĕнчен хăтăлма вăйлă пулăшнă. Октябрь тивлечĕпе чă-

---

[1] В. И. Ленин. Соч. тулли пуххи, 54 т., 440 стр.

вашсем хушшинче хутпĕлменлĕхе яланлăхах тĕп тунă. Республикăра халăха çутта кăларас, наукăна вĕрентес ĕç анлă сарăлса кайнă. Ĕççыннисем наукăллă тата атеизмлă литературăпа хытă интересленнĕ, «Безбожник», «Антирелигиозник», «Атеист» журналсене тăтăшах вуланă. Атеизмлă литературăна чăвашла, тутарла тата ытти чĕлхесемпе те пичетлесе кăларнă.

«Безбожник» журнала вулакансенчен нумайăшĕ «Безбожник» журнал тусĕсен обществин» (ОДГБ) кружокĕсемпе ушкăнĕсене пĕрлешнĕ. 1925 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче, «Безбожник» хаçат корреспонденчĕсен съездĕнче, çак обществăна «Союз воинствующих безбожников» тесе ят панă. Унăн вырăнти организацийĕсем наукăллă атеизма халăх хушшинче пропагандăлас ĕçре пысăк пулăшу панă.

Чăваш автономиллĕ облаçĕнче 1924 çулта атеистсен юхăмĕ анлă сарăлса кайнă. 1 478 члена пĕрлештерсе тăракан 35 ячейкăна пухса, кайрантарахпа Чăваш республикинчи турра ĕненменнисен Вăхăтлăх советне туса хунă. Ячейкăсем вара уездсенчи хуласемпе ялсенче тĕне хирĕçле ĕçсем пуçарнă. Нумай çĕрте пуп-семпе турра ĕненекен çынсем хушшинче тĕн ултавĕ пирки хĕрӳ калаçусем пула-пула иртнĕ. Шупашкарти, Нурăсри, Элĕкри, Вырăс Сурăмри тата ытти çĕрти халăх йышлă пухăнакан пасарсенче тĕне хирĕçле митингсем ирттернĕ. Атеизм активисчĕсем çав митингсенче тĕн сĕрĕмĕн сиенлĕхĕ çинчен ĕненӳллĕ сăмахсем туха-туха каланă.

Турра ĕненменнисен совечĕн ячейкисем, кунсăр пуçне, лекцисем вулас ĕçе йĕркеленĕ, тĕне хирĕçле вечерсем ирттернĕ, турра ĕненменнисен кĕтесĕсене уçнă, стена хаçачĕсем кăларса тăнă. Сăмахран, 1927 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕнче Шупашкар вулăсне кĕнĕ Мăн Ильпешре тĕне хирĕçле митинг пулса иртнĕ. Унта хресченсемпе шкул ачисем йышлă пухăннă. Вулăсри парти ячейкин секретарĕ Архипов митинга пухăннă халăха турра ĕненекенсемпе ĕненменнисем мункуна мĕнле ăнланни çинчен доклад туса панă. Докладчик хыççăн тухса каланă атеистсем чăваш халăхĕ патша вăхăтĕнче тата Совет влаçĕ хыççăн мĕнле пурăннине танлаштарса кăтартнă, тĕн сĕрĕмĕпе тĕшмĕшлĕхĕн пурнăçри сиенлĕхĕ пирки сăмах хускатнă.

Турăсăрсен вăрçăллă союзĕн (Союз воинствующих безбожников — СВБ) республикăри 1-мĕш съезчĕ 1927 çулта пулса иртнĕ. Унта пур уездсенчен те 39 делегат, вăл шутра 4 хĕрарăм пухăннă [1]. Съездра «Чăваш АССРĕнче тĕне хирĕçле пропаганда мĕнле пыни çинчен» тата «Чăваш АССРĕнче тĕне хирĕçле пропаганда тăвас тĕлĕшпе тăракан умри задачăсем» ыйтусене сӳтсе явнă. Гороховпа Андреев юлташсем докладсем туса панă, Казаков, Марсельский, Петров, Степанов, Маслов, Ефимов, Золотов юлташсем сăмах тухса каланă. Вĕсем пурте республикăра тĕне хирĕç кĕрешес ĕç кирлĕ шайра тăманнине, союзăн вырăнти ячейкисем организаци тĕлĕшĕнчен начар пулнине палăртнă. Съезда пынисем чылай çĕрте сектантсемпе мулласем хăйсен ĕçне вăйлатни çинчен пĕлтернĕ. Делегатсенчен нумайăшĕ Чăваш АССР территорийĕнчи тĕн организацийĕсемпе ушкăнĕсен ĕçне тĕплĕн тĕпчессине йĕркелеме кирли çинче чарăнса тăнă [2].

СВБ ячейкисем съезд хыççăн хăйсен ĕçне лайăхрах туса пыма тытăннă, атеизмлă юхăм пĕтĕм республикипех анлă сарăлнă.

Коммунистсен партийĕ çĕршывра массăллă сарăлнă атеизм юхăмĕпе тимлĕ интересленнĕ. СВБăн кулленхи ĕçĕнчи йăнăшĕсене вăхăтра тӳрлетме пулăшнă. Сăмахран, 1926 çулхи апрель уйăхĕнче пулса иртнĕ атеистсен канашлăвĕнче тĕне хирĕç пыракан кĕрешӳре административлă меслетсемпе усă курнине ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ хытă сивленĕ.

Ку кĕрешӳри пĕрремĕш тапхăр совет атеизмĕн пĕтĕм историйĕнче калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Çак тапхăрта парти çĕнĕ условисенчи—социализм туса пынă вăхăтри — атеизмлă ĕçĕн тĕп принципĕсене, формисемпе меслечĕсене çирĕплетет. Ун чухне пĕтĕм çĕршывĕпех ĕççыннисен массисене тĕн сĕрĕмĕнчен хăтарассишĕн анлă кĕрешӳ сарăлса каять. 1930 çулсенче ирттернĕ социологиллĕ тĕпчевсем совет саманин 20 çулĕ хушшинче халăхăн 50 проценчĕ турра ĕненме пăрахнине кăтартса панă.

---

[1] «Канаш» хаçат, 1927 çулхи январĕн 5-мĕшĕ.

[2] Чăваш АССР Государство тĕп архивĕ, СВБ фончĕ, ед. хр. 4, 81—97 лл.

Массăллă атеизм юхăмĕн иккĕмĕш тапхăрĕ 20—25 çул ытларах тăсăлнă. Ку тапхăрта Коммунистсен партийĕ турра ĕненменнисен Союзĕн ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе нумай вăй хурать. Партин паллă деятелĕсем Н. К. Крупская, А. В. Луначарский, И. И. Скворцов-Степанов, Е. М. Ярославский т. ыт. те атеизм юхăмне хастар хутшăнаççĕ. СВБ организацийĕсем чылай витĕмлĕ ĕçсем туса ирттереççĕ: атеизмлă кĕрешĕве халăхсен пур тĕрлĕ ушкăнĕсем хушшинче те анлă сарса яраççĕ, тĕне хирĕç туса пыракан ĕçре çĕнĕ формăсемпе тата меслетсемпе усă кураççĕ, тĕне хирĕç кĕрешекен кружоксемпе семинарсем, лекторисем, атеизмлă университетсем т. ыт. те уçăлаççĕ.

Вăтăрмĕш çулсем вĕçленнĕ тĕле СВБ организацийĕсем турра ĕненекенсемпе уйрăм ĕçлесси çине тимлĕрех пăхма, ку ĕçе анлăрах туса пыма тытăнаççĕ. Пирĕн республикăра ку вăхăтра çак кĕрешĕве СВБăн 1 200 ячейкинчи 24 пин активисчĕ хутшăнать [1]. Чăваш АССРĕнче тĕне хирĕç пыракан юхăма С. П. Петров, С. С. Кутяшов, Н. Я. Золотов тата ытти коммунистсем çине тăрса ертсе пынă.

«Тĕнпе кĕрешни вăл социализмшăн кĕрешни пулать!»—çакă пулса тăнă СВБ ячейкисен тĕп лозунгĕ. Çакна май атеистсем хăйсен ĕçне хуçалăхри тата политикăпа идеологири задачăсемпе тачă çыхăнтарнă.

Тĕне хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе культура учрежденийĕсем те пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Краеведени тĕп музейĕ СВБăн Чăваш Совечĕпе пĕрле предприятисемпе стройкăсенче, колхозсемпе шкулсенче атеизм темисемпе тĕрлĕ выставкăсем йĕркеленĕ. Выставкăсем ĕçленĕ вăхăтра атеистсем тĕн сиенĕ çинчен витĕмлĕ докладсем тунă, лекцисем вуланă, ăнланмалла та ĕнентерӳллĕ калаçусем ирттернĕ. Çакнашкал ĕçсене вĕсем уйрăмах тĕн уявĕсем çывхарнă кунсенче анлă туса пынă.

СВБ Совечĕ пуçарнипе республикăра тĕнпе атеизм историйĕн музейне уçма хатĕрленнĕ. 1940 çулта çак музей валли çурт, укçа-тенкĕ тата кадрсем те хатĕрленĕ пулнă. Анчах кĕçех пуçланнă вăрçă ку тĕллеве пурнăçлама май паман.

Çĕршыв экономикăпа политика тĕлĕшĕнчен пысăк çитĕнӳсем тунине пула тата атеизмлă воспитани ĕçне

[1] «Красная Чувашия» хаçат, 1940 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕ.

куллен вăйлатса пынă май ĕçсыннисем тĕн серепинчен ытларах та ытларах уйрăлма пуçланă. Турра ĕненекенсен шучĕ кунсерен чакса пынă, уйрăм фанатиксемсĕр пуçне, çынсем тĕн çине иккĕленӳллĕ пăхнă, турра ĕненме пăрахас çул çине тăнă. Атеизм çапла хăватлăн аталанни Совет çĕршывĕ ку тĕлĕшре калама çук пысăк çитĕнӳсем тунине пĕлтернĕ.

Фашистла Германи Тăван çĕршыв çине ирсĕррĕн килсе тапăнни совет çыннисен мирлĕ пурнăçне татрĕ. Нумай хура-шур тӳсрĕç вĕсем вăрçă çулĕсенче. Миллионшар çемье хăйĕн çывăх тăванĕсене, ачасем — ашшĕ-амăшĕсене, ашшĕ-амăшĕсем вара ачисене ĕмĕрлĕхех çухатрĕç. Çавнашкал пысăк инкексемпе йывăрлăхсем, хăйсен тăванĕсен кунçулĕсемшĕн кунĕн-çĕрĕн кулянни туррăран уйăрăлсах çитеймен çынсем хушшинче тĕн туйăмĕсем çĕнĕрен хускаласси патне илсе пынă. Партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен çав çулсенче тăшмана çапса аркатас тĕлĕшпе пыракан хастар кĕрешĕве куллен ертсе пыма тивнĕ, çавна пула ун чухне массăсем хушшинче наукăллă-атеизмлă воспитани ĕçне анлă сарса ярайман. Вăрçă вăхăтĕнче турăсăррисен союзĕ те ĕçлеме чарăннă.

Анчах политикăпа экономика тĕлĕшпе, вăрçă ыйтăвĕсемпе куллен тимлĕ ĕçлеме тивнĕ пулин те, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ, партин вырăнти органĕсемпе обществăллă организацисене ĕçсыннисем хушшинче воспитани ĕçне хавшатма юраманни, ăна вăйлатса пыма кирли çинчен асăрхаттарсах тăнă. Сăмахран, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1944 çулта «Наука пĕлĕвĕсене сарассине вăйлатасси çинчен» постановлени йышăннă. Унта естествознанипе наука пĕлĕвĕсене пропагандăлани ĕçсыннисен культура шайне малалла ӳстерес, культурăсăрлăхпа тĕшмĕшлĕхе тĕп тăвас ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине кăтартса панă. Наука пĕлĕвĕсене сарассишĕн пыракан пропагандăра çутçанталăкри явленисене материализмпа çыхăнтарни, наукăпа техника тата культура çитĕнĕвĕсене ĕнентерӳллĕ ăнлантарса пани тĕп вырăн йышăнмалла, тенĕ.

Партин Центральнăй Комитечĕ наука пĕлĕвĕсене сарассишĕн пыракан пропагандăн формисене уçăмлăн палăртса панă. Сăмахран, тĕне хирĕç туса пыракан пур ĕçсенче те тĕрлĕрен пособисемпе — плакатсемпе, диапозитивсемпе, карттăсемпе тата ытти экспонат-

семпе усă курма кирлине асăрхаттарнă. Çак постановлени наукăллă атеизм пĕлĕвĕсене халăх хушшинче пропагандăлас ĕçе чылай вăйлатма май панă.

Виççĕмĕш тапхăр. Аслă Отечественнăй вăрçа пысăк çĕнтерӳпе вĕçленĕ тата Япони милитаризмĕсене çапса аркатнă хыççăн совет çыннисем çийĕнчех халăх хуçалăхне ура çине тăратас ĕçе тытăннă. Вăрçă хыççăнхи малтанхи çулсенче Коммунистсен партийĕ капитализмран юлнă киревсĕр йăла-йĕркесене, вăл шутра тĕн тĕшмĕшлĕхне те пĕтерес, ĕççыннисене коммунизмлă воспитани парас ĕç çине пысăк тимлĕхпе пăхать. Ку тапхăрта партин Центральнăй Комитечĕ идеологи ыйтăвĕсемпе пысăк пĕлтерĕшлĕ чылай постановленисем йышăнать. Çав вăхăтран ĕнтĕ совет атеизмĕн çĕнĕ тапхăрĕ пуçланнă темелле. «Правда» хаçат, «Коммунист», «Партийная жизнь» журналсем тата ытти хаçат-журналсем наукăллă атеизм пропагандине вăйлатма темиçе хутчен те чĕнсе каланă.

«Наукăллă атеизм пропагандинчи пысăк çитменлĕхсем тата ăна лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление[1] Центральнăй Комитет партин чылай организацийĕсем халăх хушшинчи наукăллă атеизм пропагандине кирлĕ пек туса пыманнине палăртнă, тĕне хирĕçле ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме хушнă. Тĕне хирĕçле ĕçе куллен, çине тăрса, тĕплĕн те чăтăмлăн туса пымалла, турра ĕненекенсемпе кашнинпе уйрăммăн ĕçлемелле тенĕ, хăшпĕр работниксем тĕн идеологийĕ хăех пĕтсе ларĕ тесе шутланине сивленĕ.

Парти организацийĕсем, çаксене шута илсе ĕçленĕ май, вăрçă хыççăнхи çулсенче тĕн тĕшмĕшлĕхĕпе кĕрешес ĕçре чылай çитĕнӳсем тунă. Анчах кунпа пĕрлех уйрăм атеистсем наукăллă атеизм пропагандинче тĕрĕс мар меслетсемпе усă курнă, турра ĕненекенсемпе чиркӳ çыннисен тĕн туйăмĕсене кӳрентерекен ĕçсем те тунă. Ку çитменлĕхсене КПСС Центральнăй Комитечĕ 1954 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнче «Халăх хушшинче наукăллă атеизма пропагандăлас ĕçри çитменлĕхсем çинчен» йышăннă постановление лайăх кăтартса панă. Центральнăй Комитет идеологи фронтĕнчи мĕнпур работниксене турра ĕненекенсемпе чиркӳ çынни-

[1] «Тĕнпе чиркӳ çинчен». Документсен сборникĕ. М., 1965, 71—77 стр.

Малтан турра ёненнĕ çынсемпе тĕл пулнă ятпа ирттернĕ вечерта

сен тĕн туйăмĕсене кӳрентерни малашне пулмалла марри çинчен асăрхаттарнă. Кунпа пĕрлех, парти ĕççыннисене коммунизмлă воспитани парассишĕн пыракан ĕçĕн пĕр пайĕ пулса тăракан наукăллă атеизм пропагандине хавшатма юраманни çинчен те аса илтернĕ.

ССР Союзĕнче эксплуататорла классене тĕп туни тата социализм çĕнтерни тĕнĕн социаллă тымарĕсене тĕпрен хавшатнă. Çакнашкал условисенче тĕн тĕшмĕшлĕхĕпе кĕрешни вăл материализмлă мировоззрени наукăпа пачах çыхăнман тĕн вĕрентĕвĕпе кĕрешни пулать.

Халăх хушшинче наукăллă атеизм ĕçне малалла аталантарасси, унăн витĕмлĕхне вăйлатасси паянхи пысăк задачăсенчен пĕри пулса тăрать.

КПСС XXII съезчĕ тĕн тĕшмĕшĕсене пĕтĕмĕшпех çĕнтерес, совет обществинче пурне те наукăллă атеизм мировоззренийĕ майлă воспитани парас, тĕн вĕрентĕвĕ халăх хушшинче, уйрăмах ачасемпе çитĕнсе çитмен-

нисем хушшинче, сарăлнине чарса лартас задача лартнă.

1964 çулхи январь уйăхĕнче «Халăха атеизмлă воспитани парассине вăйлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановлението КПСС Центральнăй Комитечĕ тĕн идеологийĕпе кĕрешессине, ĕççыннисене атеизмлă воспитани парассине малалла вăйлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерме палăртнă.

Атеистсен кулленхи ĕçĕнче ку постановлени нумай вăхăта пыракан программа пулса тăрать. Ана йышăннăранпа ултă çул иртрĕ. Çак тапхăрта çĕршыври обществăллă организацисем халăха атеизмлă воспитани парас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерчĕç. Çавна май халăх хушшинче турра ĕненесси тата тĕн тĕшмĕшлĕхĕ сисĕнмеллех чакрĕ.

Çапла ĕнтĕ, Совет влаçĕн çулĕсенче кивĕ тĕнчерен юлнă тĕн сĕрĕмне сирсе ярассишĕн пынă кĕрешӳре пысăк ӳсĕмсем тунă. Ĕççынни массисене тĕн танатинчен çăлни вăл — социализмăн чаплă çĕнтерĕвĕ.

КАШНИ ÇЫНПА УЙРĂММĂН ĔÇЛЕМЕЛЛЕ

КПСС XXIII съезчĕн, Центральнăй Комитетăн октябрьти (1964 ç.) тата ун хыççăнхи Пленумĕсен решенийĕсенче партин идеологи тĕлĕшĕнчи ертсе пырас ĕçне наука вĕрентнĕ пек туса пымалли çула палăртса панă. Коммунистсен партийĕн çак решенийĕсем халăха атеизмлă воспитани парас ĕçе наука вĕрентнĕ пек йĕркелес тĕлĕшре тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ.

Ĕççыннисене, уйрăмах çамрăк ăрăва, атеизмлă воспитани парас ĕç çине наука вĕрентнĕ пек пăхмалла, тĕн организацийĕсен ĕçне, вĕсен идеологийĕпе моральне, турра ĕненекенсем хушшинче тĕне хирĕçле ĕçе мĕнле формăсемпе тата майсемпе туса пымаллине тарăн тĕпчесе пĕлмелле. Çавăнпа та КПСС Центральнăй Комитечĕ «Халăха атеизмлă воспитани парассине вăйлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленире парти комитечĕсемпе парти пуçламăш организацийĕсене профсоюз, комсомол организацийĕсемпе пĕрле кашни ялта е коллективра турра ĕненесси мĕнлерех пулнине сăтсе явма хушнă[1].

КПСС Центральнăй Комитечĕ хушнисене пурнăçласа, çĕршыври нумай республикăсемпе облаçсенче тĕнпе атеизм ыйтăвĕсем тăрăх конкретлă тĕпчевсем туса ирттернĕ, малалла та тăваççĕ. Çав тĕпчев материалĕсене тĕплĕн тишкерсе тухни пирĕн социализмлă общество пĕтĕмĕшпех атеистла çĕршыв пулса тăрасси патне сывхарнине кăтартса парать [2].

Унашкал тĕпчев ĕçĕсене пирĕн республикăра та туса ирттернĕ. Канаш, Сĕнтĕрвăрри тата Елчĕк районĕсенче пурăнакан нумай çынсенчен, чылай студент-

---

[1] «Тĕнпе чиркĕ çинчен». Документсен сборникĕ. М., 1964, 91 стр.

[2] «Наука и религия» журналăн 1967 çулхи 6-мĕш номерĕ.

сенчен, шкул ачисемпе шкул çулне çитмен ачасенчен ыйтса пĕлнĕ. Вĕсем тĕнпе атеизм çине мĕнле пăхнине палăртма анкетăсенче 17 ыйту тăратнă. Вĕсем «Эсир тĕн çине мĕнле пăхатăр?» текен ыйту çине панă ответсене тишкерсе тухни акă мĕн çинчен калать (процентпа):

Ыйтусем тата кĕтнĕ ответсем	VIII-X классенче вĕренекенсем	Студентсем	Ĕçлекен çамрăксем	Сула çитнисем	
				Канаш районĕ	Сĕнтĕрвăрри районĕ
1. Тĕне хирĕç кĕрешетĕп	57,2	60,0	25,4	17,6	17,2
2. Турă пур-и, çук-и—маншăн пурпĕрех	39,5	37,5	58,8	38,5	41,2

Таблицăран çакă палла: вăтам шкулсенчи VIII—X классенче вĕренекенсенчен тата студентсенчен нумайăшĕ атеизм çулĕ çинче çирĕп тăрать. Çитĕннисем хушшинче атеизм шайĕ вара вĕсенчен тăватă хут каярах. Активлă атеистсем хушшинче хĕрарăмсем арçынсенчен икĕ процент ытларах пулни палăрнă. Вăтам тата тулли мар вăтам шкултан вĕренсе тухнисемпе хутла сахал вĕреннисене танлаштарсан, малтанхисем хушшинче атеистсем çичĕ хут ытларах шутланаççĕ. Атеистсен шучĕ служащисемпе рабочисем хушшинче нумайрах, пенсионерсем хушшинче вара сахал (пурĕ те 6,4 процент çеç) пулни курăнать. Совет влаçĕн çулĕсенче халăх, пĕтĕмĕшпе илсен, турра ĕненме пăрахса атеизмлă çул çине тăнине вунпар тĕрлĕ фактпа çирĕплетсе пама пулать.

Тĕпчев ĕçĕсем тата çакна кăтартса пачĕç: турра ĕненменнисем икĕ ушкăна уйăлса тăраççĕ: рационалла тата амотивлă атеистсем.

Рационалла атеистсем хушшинче пĕтĕмĕшле пĕлӳ çителĕклĕ илнисем тата халăха лайăх ăнлантарса пама пултараканнисем пуринчен ытларах шутланаççĕ. Вĕсем наукăллă атеизма тĕплĕ пĕлеççĕ, паянхи естествознани ыйтăвĕсемпе марксистла социологи ыйтăвĕсене тĕрĕс ăнланаççĕ. Ку атеистсен ушкăнĕ опытлă лекторсенчен, агитатор-атеистсенчен тăрать. Вĕсем ха-

лăха атеизмлă воспитани парас, тĕн тĕшмĕшлĕхĕпе кĕрешес ĕçре парти организацийĕсен тĕп тĕрекĕ пулса тăраççĕ.

Амотивлă атеистсен материализмлă тавракурăмĕ ытла тарăнах мар. Çавна май вĕсем тĕнчере пулса иртекен пур явленисене те çителĕклĕ ăнлантарса пама пултараймаççĕ. Кусен шутне пуринчен ытла шкулта вĕреннĕ çулсенче атеист пулса тăнă çамрăксем кĕреççĕ. Шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вĕсем хăйсен атеизмлă пĕлĕвĕсене пур чухне те наука çитĕнĕвĕсемпе çирĕплетеймеççĕ. Çак атеистсен йышĕнче ученăйсене, вăтам пĕлӳ илнĕ е аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă специалистсене, обществăллă организацисемпе производство коллективĕсен ответлă работникĕсене те курма пулать. Вĕсенчен нумайăшĕ агитаторсемпе политинформаторсем пулса ĕçлеççĕ.

Атеизм юхăмне тĕрĕс ăнланманни е ăна тивĕçлĕ хакламанни час-часах килĕшӳсĕр ĕçсем тăвасси патне те илсе çитерет. Тепĕр чухне атеизмлă хавхалану сасартăк çуралнине, тĕнпе кĕрешмелли ленинла принципсемпе майсене пăхăнманнине курма пулать.

Наукăллă атеизм никĕсĕсене лайăх пĕлменнине пула амотивлă атеистсем хăшпĕр чухне тĕн тĕшмĕшлĕхĕпе кĕрешес ĕçре сиен çеç кӳрекен административлă майсемпе усă кураççĕ. Лекторсемпе пропагандистсенчен тата 225 учительрен ыйтса пĕлни, сăмахран, вĕсем «чиркӳсемпе кĕлĕ çурчĕсене халех хупса лартма» сĕннине кăтартса панă. Ку вăл мĕнрен килет-ха? Паллах, вĕсем атеизмлă воспитани ĕçне мĕнле йĕркелемеллине лайăх ăнланманнинчен килет.

Наукăллă-атеизмлă воспитани памалли тĕп меслет вăл турра ĕненекенсемпе тӳсĕмлĕ те ялан ĕçлесси, вĕсене çутçанталăкпа общество аталанăвĕн тĕп закономерноçĕсене наука тĕлĕшĕнчен пĕлсе ăнлантарса парасси пулать. Çакна пурнăçлама амотивлă атеистăн хăйĕн те нумай пĕлмелле, тĕн çинчен калакан вĕрентӳсен тĕрлĕ чеелĕхне лайăх ăнланса илмелле, вĕсене тивĕçлипе сивлемелле. Атеистсен уйрăмах Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн тĕнпе чиркӳ тĕлĕшпе тытса пыракан политикине тата тĕн йăлисем çинчен калакан совет законĕсене тĕплĕн вĕренмелле.

КПСС Центральнăй Комитечĕ атеистла кадрсем, вăл шутра агитаторсем вĕрентсе хатĕрлес ĕçре парти-

пе комсомол организацийĕсене политикăллă вĕренӳ системипе анлăрах усă курма сĕннĕ; атеизмлă воспитани ыйтăвĕсемпе парти, совет, комсомол тата профсоюз работникĕсен, активистсен, учительсемпе врачсен, пионервожатăйсемпе ача сачĕсенчи воспитательсен, техникăлла профессисене вĕрентекен училищĕсемпе шкулсенчи воспитательсен, культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче ĕçлекенсен, журналистсен, хĕрарăм совечĕсен тата пурăнмалли çуртсен комитечĕсен председателĕсемпе членĕсен, пенсионер совечĕсен членĕсен семинарĕсене ирттерме хушнă [1].

Халăхран ыйтса пĕлни çавăн пекех унăн ытларах пайĕ тĕнпе пачах интересленменнине кăтартса панă. Социологсем вĕсене нименпе те интересленменнисем (индифферентлисем) тесе ят панă. Унашкал çынсем турра та, шуйттана та ĕненмеççĕ, анчах çав вăхăтрах çирĕп атеистсем те пулса тăман. Вĕсем хушшинче 25—30 çулсенчи граждансем ытларах шутланаççĕ. Канаш районĕнче, сăмахран, унашкаллисенчен 55,6 проценчĕ — пуçламăш е тулли мар вăтам пĕлӳ илнĕ çынсем. Вĕсем пуринчен ытларах колхозниксем (ыйтса пĕлнисенчен 50,1 проценчĕ) тата рабочисем (53,1 процент) хушшинче нумай.

Анчах индифферентлисем те тĕрлĕрен пулаççĕ. Вĕсенчен пĕрисем тĕнпе интересленмеççĕ пулин те, ăна сиенлĕ идеологи тесе шутлаççĕ, теприсем вара тĕнре нименле сиенлĕхе те курмаççĕ. Малтанхисем тĕн коммунизм обществи тума чăрмантарнине, вăл ăстăна пăтратнине, сывлăха хавшатнине, ĕççыннисен творчествăллă пуçарулăхне чарса тăнине лайăх ăнланаççĕ. Апла пулин те, вĕсем атеизмлă ĕçе хутшăнмаççĕ, тĕн хăй тĕллĕнех пĕтсе ларасса шанаççĕ: «Турра ĕненекенсене чăрмантарма кирлĕ мар, ваттисем вилсе пĕтнĕ май тĕн хăех пĕтсе ларĕ»,— теççĕ.

Индифферентлисен иккĕмĕш пайĕ тĕн идеологири тăшман пулнине курмасть терĕмĕр. Вĕсен шутне пуринчен ытла хăшпĕр çамрăксем тата уйрăмах çула çитнĕ хĕрарăмсем кĕреççĕ. «Тĕн мана нименле сиен те кӳмен»,— тет вĕсенчен пĕри. Кунта тĕнпе килĕшни уççăнах курăнать ĕнтĕ. Çавăнпа вĕсем тĕнпе хирĕçмеç-

---

[1] «Тĕнпе чиркӳ çинчен». Документсен пуххи, 1964, М., 88 стр.

çĕ, «хăнăхнă йăлапа» тĕне ĕненекенсемпе пĕрле ачисене тĕне кĕртеççĕ, тĕн праçникĕсене паллă тăваççĕ, «çынсенчен лайăх мар» тесе, килĕсенче турăшсемпе лампадăсем тытса тăраççĕ, хутран-ситрен чиркĕве те çӳреççĕ.

Индифферент л исенчен нумайăшĕ мировоззрени ыйтăвĕсемпе пачах та интересленмест. «Нимĕнле кĕнеке те вуламастăп, вулама та кăмăл çук», «Астрономи çинчен нимĕн те пĕлместĕп. Хĕвелĕ çаврăнать-и çĕр тавра е çĕр хĕвел тавра — маншăн пурпĕрех. Мĕне кирлĕ мана наука»,— теççĕ унашкал çынсем.

Вăрмар районĕнчи Пăртасри чиркӳре ĕçленĕ, халĕ турра ĕненме пăрахнă Л. Покровский сăмах калать.

Çапла ĕнтĕ, наукăллă атеизм ыйтăвĕсем çеç мар, биологипе химин, физикăпа математикăн, кибернетикăпа астрономин тата марксизмлă социологин паянхи çитĕнĕвĕсем те вĕсене нимĕн чухлĕ те интереслентермеççĕ. Вăхăтра пулăшу памасан, унашкаллисем пурнăç таппинчен юлма, чиркӳ çыннисен аллине тепĕр хут лекме пултараççĕ. Тĕпчесе пĕлни тата çакна кăтартса парать: индифферентлисенчен 30—50 çула çитнисем — 10 процент, 50 çултан иртнисем — 12 процент, 60 çула çитнисем 19 процент таран турă пирки иккĕленме пуçлаççĕ.

Çитĕннĕ çынсем индифферентлă пулни, урăхла каласан нимĕнпе те интересленменни, пĕр енчен, вĕренӳ заведенийĕсенче атеизмлă воспитани ĕçне кирлĕ пек туса пыманнинчен килет. Шкулсенчен вĕренсе тухнисенчен нумайăшĕ — рабочисемпе служащисем, колхозниксем—наукăллă атеизм пĕлĕвĕсен минимумне те илмен. Тĕп сăлтав вара — халăх хушшинче наукăллă

атеизм пропагандине, производство коллективĕсенче массăллă-политикăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыни.

Çынсем индифферентлă пулни обществăллă организацисен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине пĕлтерет. Çавăнпа та атеистсен çак çынсен культурăллă шайĕпе пĕтĕмĕшле пĕлĕвĕсен шайне ӳстерессишĕн, вĕсен атеизмлă мировоззренине пуянлатассишĕн çине тăрса ĕçлемелле. Ку тĕлĕшпе вĕсен, КПСС Центральнăй Комитечĕ 1964 çулхи январь уйăхĕнче йышăннă постановленире кăтартса панă пек, пур майсемпе те—кинопа, литературăпа тата искусствăпа, радиопа тата телевиденипе усă курмалла.

Индифферентлисем хушшинче атеизмлă ĕçе тĕплĕн туса пырсан, вĕсемпе кашнипе уйрăммăн ĕçлесен, обществăллă организацисем тĕне хирĕç пыракан кĕрешӳре пысăк çитĕнӳсем тунă пулĕччĕç.

Пирĕн общественноçăн уйрăмах тĕн пирки иккĕленекенсемпе çине тăрса ĕçлемелле. Кусем вĕсем — уйрăм сăлтавсене пула атеистсем пулса çитеймен е атеистсем мĕн калани пирки иккĕленекен çынсем. Вĕсенчен ытларах пайĕ малтан турра ĕненнĕ, анчах наукăллă-атеизмлă витĕм панине пула тĕнрен уйрăлма пуçланă. Вĕсем йышлă мар. Канашпа Сĕнтĕрвăрри районĕсенче ирттернĕ тĕпчевсем кăтартса панă тăрăх, вĕсен хисепĕ ыйтса пĕлнисен 16 проценчĕ чухлĕ пулать. Кусем, тĕпрен илсен, 40—60 çулсенчи çынсем, вĕсенчен ытларахăшĕ сахал вĕреннĕ, пуçламăш е тулли мар вăтам пĕлӳ çеç илнĕ. Иккĕленекеннисем пуринчен ытла кил хуçи хĕрарăмĕсемпе пенсионерсем хушшинче нумайрах.

Вĕсен мировоззренийĕ çирĕпех мар. «Турра ĕненетĕн-и, тетĕр-и? Пĕлместĕп. Хăш чухне ĕненетĕп, тепĕр чухне çук»,— теççĕ пĕрисем. «Ĕненместĕп. Хăш чухне ĕненетĕп. Уйрăм самантсенче турă пур пекех туйăнать»,—хуравлаççĕ теприсем. Вĕсенчен нумайăшĕ, уйрăмах çамрăксем, хăйсен пурнăçĕнче тĕнпе те ытла сыхăнсах курман, атеизмлă çирĕп пĕлӳ те илеймен. Çавăнпа вĕсен мировоззренийĕ иккĕленӳллĕ пулса юлнă та ĕнтĕ.

Тĕн пирки иккĕленекенсемпе ĕçлесси атеистсемшĕн пысăк та ответлă задача пулса тăрать. Иккĕленекенсене чиркӳ çыннисемпе турра ĕненекенсен аллине памалла мар. Ку тĕллеве эпир пурнăçлама пултаратпăр

тата пултармалла та. Иккĕленекенсем ку чухлăхи чăнлăха, наукăпа техникăна, социаллă прогреса кура тата наукăллă атеизм куллен ĕçленине пула çуттапла, наукăпа прогресс патнелле ытларах туртăнаççĕ. Пирĕн çакăнпа пĕлсе усă курмалла. Çавна май иккĕленекенсем валли интереслĕ мероприятисем ирттермелле, вĕсемпе кашнипе уйрăммăн ĕçлеме тăрăшмалла.

Наукăллă атеизм ĕçĕнчи задачăсене палăртса парса, КПСС Центральнăй Комитечĕ хăйĕн постановленийĕсенче турра ĕненекен кашни çын патне çитме, ăна тĕн танатинчен хăтăлмашкăн пулăшма кирлине кăтартса панă. Çаксене пурнăçлас тесен, пирĕн турра ĕненекенсене, вĕсен шухăш-кăмăлне, ĕмĕчĕсене, мировоззренине лайăх пĕлсе çитмелле. Паллах, чи малтан кашни ялта хулара конкретлă тĕпчевсем туса ирттермелле.

Республикăри чылай районсенче ирттернĕ социологиллĕ тĕпчевсем турра ĕненекен çынсем çитĕннисем хушшинче — 24—27 процента яхăн, ĕçлекен çамрăксем хушшинче — 6 процент ытларах, вĕренекен çамрăксем хушшинче пĕр процента яхăн пулнине кăтартса параççĕ. Турра ĕненекенсем хушшинче уйрăмах 50 çултан аслăрах, хутла сахал вĕреннĕ çынсем (54 процент) шутланаççĕ. Вĕсенчен ытларах пайĕ—ĕçлемен çынсем: пенсионерсем, кил хуçи хĕрарăмĕсем. Çамрăксенчен турра ĕненекеннисем сахал, вĕсем хушшинче сектантсемпе çыхăннисем кăна тупăкалаççĕ.

Тĕнпе мĕн таран çыхăннине шута илсе, Воронежри М. К. Тепляков социолог турра ĕненекенсене виçĕ ушкăна уйăрать: çӳлерех çырса кăтартнă иккĕленекеннисем, турра чăнласах ĕненекенсем тата хăй тĕнне кăна сĕмсĕр ĕненсе пурăнакансем (фанатиксем). Виççĕмĕшĕсен шучĕ турра ĕненекенсем хушшинче пилĕк процентран та иртмест.

Фанатиксем — хутла сахал вĕреннĕ, çула çитнĕ е ватă çынсем. Вĕсем тĕнчене кивĕ заветра çырса кăтартнă пек кăна ăнланаççĕ, хăйсен чунĕсене турă умĕнче «çăлассишĕн» çеç тăрăшаççĕ. Çакнашкал çынсем, тĕпрен илсен, ниçта та ĕçлемеççĕ, суйлавсемпе пухусене, митингсене çӳремеççĕ, хăйсен ачисене те ирĕксĕрлесех турра ĕненме вĕрентеççĕ. Ăнран тухса кайсах кĕлтунă вăхăтра усал ĕçсем, пысăк инкексем те сиксе тухма

пултараççĕ. Атеистсемпе урăхла тĕне ĕненекен çынсене фанатиксем чăтма пултараймаççĕ.

Пирĕн тĕп задача вĕсене обществăшăн усăллă ĕçе явăçтарасси, вĕсем ытти çынсене, уйрăмах ачасене, тĕн ултавĕпе минретессинчен сыхласси, халăх интересĕсене сиенлĕ ĕçсем тăвасран чарса тăрасси пулса тăрать.

Турра чăнласах ĕненекенсем хăйсене кăштах урăхларах тытаççĕ. Вĕсен пурнăçĕнче «таса турă» çинчен çырнă кĕнекесем тĕп вырăн йышăнаççĕ, çав кĕнекесен содержанине хальхи условисене шута илсе ăнлантарса параççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ халăх хушшинче тĕне ятарласа пропагандăлать, ачасемпе çамрăксене вăйлă витĕм парать. Вĕсем обществăллă пурнăçа хутшăнмаççĕ, ĕçрен таврăннă хыççăн пĕрле пухăнса ларма (уйрăмах сектантсем) тăрăшаççĕ, час-часах çемье е йăла ыйтăвĕсене пĕрле татса параççĕ, пĕр-пĕрне пулăшаççĕ, кĕлĕ çурчĕсене пĕрле çăреççĕ. Çапла вара, тулашри тĕнчерен уйрăлнă тĕн коллективĕ пулса тăрать. Коллективизм туйăмĕ, идея тата тĕн тĕлĕшĕнчен çывăх пулни вĕсене тачă пĕтĕçтерет, çавăнпа та вĕсене массăллă-атеизмлă ĕçе явăçтарма питех те йывăр.

Çак уйрăмлăхсене тата ытти сене те шута илсе, вĕсем хушшинче атеизмлă ĕçе анлă сарса ямалла. Турра ĕненекенсем хушшинче—вĕсем ĕçленĕ е пурăнна вырăнта — ĕçлеме «авторитетлă çынсене, пурнăçа пĕлекен тата вĕсен атеизмлă вĕрентĕвне организацилеме пултаракан çынсене уйăрмалла, кашни общинăри турра ĕненекенсемпе уйрăмшăрăн ĕçлеме атеистсен ушкăнĕсене уйăрмалла. Турра ĕненекенсене пĕтĕмĕшле пĕлӳ илмелли кружоксемпе шкулсене явăçтармалла»,—тенĕ КПСС Центральнăй Комитечĕ «Халăха атеизмлă воспитани парассине вăйлатас тĕлĕшпе тумалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленире.

Социологиллĕ конкретлă тĕпчевсем, çапла вара, халăхăн тĕрлĕ категорийĕсене ăнланса, вĕсен уйрăмлăхĕсене шута илсе ĕçлеме, халăх хушшинче наукăллă-атеизмлă ĕçе лайăхрах йĕркелеме май параççĕ.

ТĔНЕ ХИРĔҪ КĔРЕШЕС ĔҪРИ ХАШПĔР УЙРĂМЛĂХСЕМ

Ку таранччен эпир турра мĕн таран ĕненнине е атеист пулнине пĕлме çынсене тĕрлĕ ушкăна уйăрасси çинчен калаçрăмăр. Атеизмлă ĕçе йĕркеллĕ туса пыма турра ĕненекенсене хăйсене те уйрăм ушкăнсене пайлани кирлĕ. Çавна май турра ĕненекен е тĕн пирки иккĕленекен çынсене православи тĕнне ĕненекен, христианла сектантсен тата авалхи тĕн йăлисене (язычество) пăхăнакансен ушкăнĕсене пайламалла.

Турра ĕненекенсем е иккĕленекенсем, уйрăмах ялта пурăнаканнисем, пуринчен ытла православи тĕнне пăхăнаççĕ. Анчах та вĕсен ăстăнĕнче тата пурнăçĕнче православи тĕн вĕрентĕвĕпе йăлисем, çавăн пекех тата язычествăран юлнă ĕненӳсемпе йăласем пĕрле хутшăнса кайнă.

Чăвашсен тĕн ĕненĕвĕпе йăлисенчен нумайĕшĕ тахçанхи авалхи ĕмĕртен упранса юлнă. Вăтам çула çитнĕ тата чылай пурăнса курнă çынсем, хăйсем православи тĕнне ĕненеççĕ пулин те, авалхи тĕн йăлисемпе йĕркисене те пăхăнаççĕ: вилнисене авалхи йĕркепе пытараççĕ, христиансен туррине кĕлтăваççĕ, анчах çав вăхăтрах киремете те манмаççĕ. Килĕсенче вĕсен турăш та, хăйсене «хӳтĕлекен» йĕрĕх пĕрни те пур. Ку ушкăнри çынсем чиркĕве те çӳреççĕ, тухатмăшсемпе асамçăсенчен те пулăшу ыйтаççĕ.

Христианла тĕнпе ун умĕнхи тĕнсен йăлисем çапла пĕр-пĕринпе хутшăнса кайни вĕсем хушшинче пысăк уйрăмлăхсем çуккинчен те килет. Акă, сăмахран, пур тĕнсенче те турă пур тесе шутлаççĕ, унăн хăватне, асамлă вăйсене ĕненеççĕ. Халĕ ĕнтĕ православи тĕнĕн чиркӳ çыннисем язычество йăлисемпе кĕрешме пăрахнă теме те юрать.

Православи чиркĕвĕ, чăвашсем хушшинче авалхи

Трибуна çинче — баптистка пулнă Л. Соловьева.

тĕн тĕшмĕшĕсем упраннине шута илсе, халăх Христоса ĕненнессе шанать, çынсене тĕн пĕрлешĕвĕсене явăçтарма тăрăшать.

Христианство тĕнне ĕненекенсем хушшинче сектантсем урăхла уйрăмлăхсемпе палăрса тăраççĕ. Вĕсен шучĕ пысăках мар. Сектантсен фанатизмĕ вăйлăрах, вĕсен ĕненĕвĕ Библире çырса кăтартнипе çыхăнса тăрать. Апла пулин те, чăвашсен авалхи язычество йăлисем вĕсен те чылай упранса юлнă.

Чăваш, Пушкăрт, Тутар республикисен тата хĕвел тухăç енчи ытти кӳршĕ облаçсен территорийĕсенче пурăнакан чăвашсен пĕчĕк пайĕ халĕ те авалхи язычество ĕненĕвне тата йăлисене пурнăçлать. Вĕсем таса е усал сывлăшсене те, турăсене те ĕненеççĕ. Çавна пула ĕнтĕ кунти чăвашсем хушшинче кивĕ йăласемпе тĕн праçникĕсем — сурхури, çăварни, мункун, çимĕк, çумăр чӳкĕ т. ыт. те — паян кун та упранса юлнă. Хăшпĕр çĕрте кивĕ йăла-тĕшмĕшсене хĕрарăм çăмăлланнă вăхăтра, туйсенче, кил-çурт лартнă чухне те пăхăнаççĕ. Уйрăм вырăнсенче вара авалхи тĕнпе çыхăннă кĕпе-тумтир, савăт-сапа тата ытти пурлăхсем халĕ те упранса юлнă. Çавнашкал кивĕ йăла-йĕркесене пăхăнакансем хăйсене чăн-чăн чăвашсем тесе шутлаççĕ. Хутран-ситрен вĕсем хушшинче чăвашсен авалхи тĕн идеологине вĕрентекен çынсене, кĕлтăвакан пуçлăхсене те (уй чӳк пуç, киремет карти пăхакан, юмăçсем) курма пулать.

Язычествăран юлнă кивĕ йăласем те, кирек мĕнле тĕн тешмĕшлĕхĕ пекех, сиенлĕ. Вĕсем ялхуçалăх экономикине те сахал мар сиен кӳнĕ. Тĕшмĕшлĕ çынсем, киреметсене кайса, чĕрĕ хурсем, кăвакалсем, чăхсем,

путекçем хăварса чӳклеççĕ. Хресченсем тĕне ĕненнине кура вĕсене чăвашсен асамçисем те, ултавçă пупсем пекех, сĕмсĕррĕн çаратнă.

Совет çыннисенчен нумайăшĕ тĕрлĕ тĕшмĕшлĕхрен хăтăлнă пулин те, тĕн йăлисем хăшпĕр ĕççыннисен ăстăнне халĕ те минретеççĕ-ха. Турра ĕненекенсем ачасемпе çитĕнсе çитмен çамрăксене хăйсен танатине çавăрса илесшĕн: вĕсене усал вăйсемпе киремет çинчен тĕрлĕрен юмах-халапсем каласа параççĕ, тĕн йăлисене пăхăнма хистеççĕ.

Пачах турра ĕненмен çынсем хушшинче те тепĕр чухне тĕн тĕшмĕшĕсене асăрхама пулать. Сăмахран, хăшĕ-пĕрисем юмăçсем патне çӳреççĕ, вилнисен чунĕсенчен тата масарсенчен хăраççĕ. Мĕн чухлĕ çын тĕлĕксем пирки тĕшмĕшленмест пуль.

Çапла ĕнтĕ, чăвашсен кивĕ ĕненĕвĕсемпе йăлисем, христианство тĕнĕн йăлисем пекех, çынсен ăстăнне минретеççĕ, пурнăç йĕркисене пăсаççĕ, тĕшмĕшлĕ çынсене коммунизм строителĕсен ретне тăма кансĕрлеççĕ. Çавăнпа та пирĕн кирек мĕнле тĕшмĕшлĕхе те йăлтах пĕтерессишĕн çине тăрса кĕрешмелле.

ССР Союзĕнче социализм туса хунă тата культурăллă революци çĕнтернĕ май тĕн ĕненĕвĕн никĕсĕ кисреннĕ, тĕн тĕшмĕшлĕхĕпе йăлисем те пурнăçран тухса пыраççĕ. Кивĕ йăла-йĕркесенчен чылайăшĕ халĕ тĕпрен улшăннă, вĕсем тĕнпе çыхăнма пăрахнă. Тĕн тĕшмĕшлĕхĕ майĕпен пĕтсе пырасси, çапла ĕнтĕ, кунсерен вăйланса пырать. Анчах тĕне пĕтĕмпех тата яланлăхах çĕнтерес тесен, массăсем хушшинче воспитани ĕçне çине тăрса туса пыни кирлĕ.

Хăшпĕр çынсем мĕне ĕненеççĕ-ха?

Авалхи тĕттĕм те нушаллă пурнăçра чăвашсем çутçанталăкăн киревсĕр вăй-хăвачĕсене ăнланма тата вĕсемпе кĕрешме пачах та пултарайман. Çак йыьăр туйăм вĕсен ăстăнне пăтратнă, тĕнчере тĕрлĕрен вăй-хăватсем — усал вăйсемпе таса вăйсем пуррăн туйăнтарнă. Тĕшмĕшлĕ çынсем шухăшланă тăрăх, усал вăйсем инкек кӳнĕ, таса вăйсем вара харпăр хăй пурнăçĕнче е хуçалăхра пулăшнă имĕш.

Язычество тĕн ĕненĕвĕсемпе йăлисем чăвашсем хушшинче чылай вăхăт хушши упранса юлнă. Çак кивĕ тĕне ĕненекен çынсем Октябрь революцин малтанхи çулĕсенче сахал мар пулнă. Ку вăл хресченсен уй-

рăм хуçалăхĕсем чухăн пулнăран, халăх хутла пĕлменрен килнĕ. Хресчен çыннине, унăн тĕн тĕшмĕшĕсемпе минренĕ арăмне тавралăхра пĕрехмай тĕрлĕ вăй-хăватсем тата турă пуррăн туйăннă. Кăштах урăхла сас-чĕв илтĕнсен е пӳрт пĕренисем сивĕпе шартлатса çурăлсан та тĕшмĕшлĕ çынсем çакна усалсен ĕçĕ тесе шутланă. Çав усалсем шутне вĕсем хура кушаксене, çĕрле кăна вĕçекен тăманасене, йытăсене тата ытти чĕрчунсене кĕртнĕ.

Чăвашсен авалхи тĕн ĕненĕвĕсемпе йăлисем массăллăн коллективизаци пуçланичченех тăсăлса пынă. Колхозлă хресченсем пĕрлешсе хăйсен тĕп ĕçне наукăллă никĕсе пăхăнса йĕркелени чăвашсене çутçанталăк умĕнчи чуралăхран хăтарчĕ, вĕсем тĕрлĕрен вăй-хăватсене ĕненнине сирсе пăрахрĕ.

Социализм тунă тапхăрта язычество тĕн ĕненĕвĕн нумай йăлисемпе тĕшмĕшĕсем тĕп пулчĕç. Анчах та çĕнĕ условисенче те хăшпĕр кивĕ йăласем тăрса юлнă. Ку вăл колхозсене пĕрлешмен хресченсен уйрăм хуçалăхĕсем сыхланса юлнинчен те чылай килнĕ. Чăвашсем ун чухне çĕр вăй-хăвачĕсене — çĕр амăшне, çĕр ашшĕне т. ыт. те ытларах ĕненнĕ.

Хресченсем тĕшмĕшлĕхе пăхăннине ăнланма йывăр мар ĕнтĕ: колхозсене пĕрлешмен хресчен çутçанталăк вăйĕсенчен ялан шикленсе пурăннă. Тырă тухăçлăхĕ пĕчĕк пулни, пăр çапни, вăйлă çилсем вĕрни, çумăр çуманни, тăм ӳкни ăна пысăк инкек кӳнĕ. Вăл вара, ырлăх ыйтса, пĕрмай турра пуççапнă.

Чăвашсем хушшинче шыври вăй-хăватсене ĕненесси те анлă сарăлнă пулнă: çынсем шыв амăшне, шыв вутăшне, шыв шуйттанне тата ытти вăй-хăватсене те ĕненнĕ.

Чăваш халăхĕн историйĕнче çак тĕшмĕшлĕхĕн тымарĕсем тарăн. Ытти халăхсем хĕвелтухăç енчен хĕснине пула чăвашсен вăрманлă вырăнсене кайса пурăнма тивнĕ. Кунта вĕсем, çутçанталăкран килекен инкексене тӳссе, кашни çĕр татăкĕшĕн йывăррăн кĕрешнĕ. Вăрманти çĕр шурлăхлă пулнă. Çумăрсем хыççăн çĕр хăвăрт типмен. Хресченсем тырпул сахал пухса илнĕ. Çаксем пурте çынсен ăстăнĕнче йывăр йĕрсем хăварнă, тĕн тĕшмĕшлĕхне вăйлатнă. Халиччен, хăйсен ку таранченхи вырăнĕнче шыв вĕсемшĕн тус шутланнă пулсан, халĕ ĕнтĕ вĕсемшĕн тăшман

пулса тăнă. Çапла вара, шыври вăй-хăватсем пирки чăвашсем хушшинче икĕ тĕрлĕ ĕненӳ çуралнă: малтанхисем — ыррисем, кайранхисем — усаллисем.

Шыври вăй-хăватсене ĕненесси уйрăмах Атăл, Çавал, Сăрă, Кĕтне, Пăла юханшывĕсем тата кӳлĕсем таврашĕнче пурăнакан тĕттĕм халăх хушшинче упраннă. Кунта халĕ те çынсене путаракан шыв усалĕсем тата карап ванчăкĕсем тухакан тĕпсĕр кӳлĕсемпе юханшыв аваpĕсем пирки халапсем çӳреççĕ.

Тăвай, Вăрмар, Канаш районĕсенчи ялсенчи тĕшмĕшлĕ çынсем шухăшланă тăрăх, çавнашкал тĕпсĕр кӳлĕсем халĕ те пур имĕш. Вĕсенчен пĕри Тăвай районĕнчи Элпуç ялĕ çывăхĕнчи Эль кӳлли пулса тăрать. Вырăнти çынсем каласа панинчен çак кӳлĕ авалрах 150 метр, халĕ 50—60 метр тарăнăш пулни курăнать. Кунти чăвашсем унта шыври вутăш пурăнать тесе шутланă. Таврари Нюшкасси, Элпуç, Çĕнçырма, Ураскасси, Авăспӳрт Кипеч, Çĕнĕ Пуянкасси, Енĕш Нăрваш ялĕсенчи хресченсем те, çак кӳлĕ хĕрне пухăнса, турăран çумăр çутарма ыйтса кĕлтунă. Турра çапла пуççапни юлашки хут 1921 çулта пулнă.

Чăваш ялĕсенче халĕ те çăлра, кӳлĕре е çăлкуçра тытаканни пур тенине илтме пулать. Вутăшсем тытнипе тĕттĕм çынсем чирсем ереççĕ тесе шутланă. Савăнна вара шăнса пăсăлнинчен, ӳслĕкрен е пыр шыçнинчен сывалма вĕсем шыври вутăшсене парнесем пырса панă.

«Атăл çын йышăнатех» текен тĕшмĕшлĕх те халăх хушшинче анлă сарăлнă. Ваттисем каланă тăрăх, «çын шыва каймасăр Атăл лармасть» е «çын шыва путмасăр Атăл тапранмасть» имĕш. Ку вăл — чăвашсен авалхи тĕн йăлин юлашки. Аслă юханшыв вăй-хăватне ĕлĕк-авал чăвашсем Атăл тесе шутланă, ăнах вара парнесем панă.

Атăл хĕрринче вырнаçнă Чăваш Утар ялĕнче пурăнакансем каланă тăрăх, çывăхри затонра кукăр майра шыв шуйттанĕ пурăнать, çак вырăнта шуйттан çулленех çын чунне йышăнать имĕш. Çынсем кунта, чăнах та, час-часах шыва путса вилнĕ. Çавна пула ĕнтĕ тĕшмĕшлĕ çынсем «ку вăл ахальтен мар, ку тĕлте мĕн те пулин пурах» тесе шухăшланă. Çапла ĕнтĕ, шывран шикленни, хăрани уйрăм çынсене тĕшмĕшлĕх патне илсе пынă.

Тĕнче уçлăхĕнчи явленисене тĕрĕс ăнланманни те çынсем хушшинче нумай тĕшмĕш çуратнă. Чăвашсем, сăмахран, тĕрлĕрен хĕвел вăй-хăвачĕсене: хĕвел ашшĕне, хĕвел амăшне тата ыттисене те ĕненнĕ. Çӳлти вăй-хăватсем шутне çӳлти турă, çут тĕнче тытакан, кăвак хуппи тата ыттисем те кĕнĕ. Хĕвеле вĕсем уйрăм турă вырăнне йышăннă, ăна çунатлă, уралла, хӳреллĕ питĕ хитре вĕçен кайăк тесе ăнланнă.

Халĕ çак тĕшмĕшсенчен нумайăшĕ пачах пĕтсе ларнă темелле. Астрономи наукин никĕсĕсене алла илнĕ совет çыннисем текех ĕнтĕ, Хĕвелпе Уйăха, кометăсемпе метеоритсене курса тĕлĕнсе, вĕсене теменле вăй-хăватсем тесе шутламаççĕ. Акă, Хĕвел спутникĕсенчен пĕри Икар комета 1968 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнче Çĕр чăмăрĕ çывăхĕнчен (6—7 миллион километртан) иртсе кайнă. Çутçанталăкра сайра хутра çеç тĕл пулакан çак явление совет çыннисенчен нумайăшĕ пысăк интереспа сăнаса тăчĕ, ун пирки хаçатсемпе журналсенче çырса пĕлтернисене пысăк тимлĕхпе вуларĕ. Халăх хушшинчи хăшпĕр тĕшмĕшлĕ çынсем çеç Икар Çĕр чăмăрĕ çине ӳкесрен хăраса ӳкнĕ, ку вăл ырра мар, тĕнче пĕтсе лармĕ-ши, тесе шутланă.

Тĕшмĕшлĕх, çапла ĕнтĕ, уйрăмах хутла сахал вĕреннĕ çынсем хушшинче сарăлнă. Тĕнче уçлăхĕнче сайра хутра курăнакан явленисене — метеоритсемпе кометăсем вĕçнисене асăрхаса, çав çынсем вĕсене халĕ те вутлă çĕлен теççĕ. Çак усал вăй-хăват вара чирлĕ çын патне вĕçет имĕш. Тепĕр чухне чирлисем хăйсемех вутлă çĕлен ун патне çӳрет тесе каласа тытăнаççĕ. Унăн тĕшмĕшпе пăтраннă ăстăнĕ тата ытларах арпашать, куçа темĕн те пĕр курăнакан пулать. Чирлĕ çын аташма, каласа тытăнать. Тĕшмĕшлĕ çынсем, çакна кура, ун патне вутлă çĕлен килчĕ тесе шухăшласçĕ.

Хĕвел е Уйăх тĕттĕмленни те тĕшмĕшлĕ çынсем хушшинче хăрушла ăнланусем çуратнă. Çутçанталăкри çак явление чăвашсем мĕн авалтанпах вупăр пуснинчен килет тесе ăнлантарнă. Вăл Хĕвелпе Уйăха çăтса ярасшăн, çынна тапăнать, ыйхă вăхăтĕнче ăна мăйран пăвать, ал-урасăр тăратса хăварать тесе шухăшланă тĕшмĕшлисем. Çынсем вара, Хĕвелпе Уйăха çăлса хăварас тесе, темĕн те пĕр туса тĕшмĕшленнĕ.

Çакнашкал тĕшмĕшсем чăвашсем хушшинче Ок-

тябрь хыççăнхи тапхăрта та çӳренĕ. 1923 çулхи февралĕн 20-мĕшĕнче Уйăх тĕттĕмленнĕ каç Шупашкар районĕнчи Самуккасси ялĕнчи ватă çынсем çӳлелле çĕрĕк вĕрен таткисем пенĕ, вупăра туртса антарса Уйăха çăлса хăварас тенĕ. Хăшĕ-пĕрисем юр çине вĕри кĕл тухса сапнă, усал вăй-хăват питне пĕçертсе яма сĕмленнĕ[1].

Хĕвел тĕттĕмленнĕ чухне те çынсем çавнашкал тĕшмĕшлĕхпе хăтланнă. Хĕвел патĕнчен вупăра хăваласа ярас тесе, хăшпĕр карчăксем ун еннелле вутпуççисем пенĕ[2]. Вупăр, çынсене тапăнса, паралич тата ытти чирсемпе чирлеттерет текен сăмах тĕттĕм çынсем хушшинче нумайччен çӳренĕ. Хĕвел е Уйăх тĕттĕмленнĕ пирки çӳренĕ тĕшмĕшсем халĕ пачах пĕтнĕпе пĕрех. Çапах та вупăра ĕненекенсем хутран-ситрен тĕл пулаççĕ-ха.

Çак тĕшмĕшсем пурте хутла сахал вĕреннĕ çынсем тĕнче уçлăхĕнчи нумай явленисене — кометăсемпе метеоритсем вĕçнине, Хĕвел е Уйăх тĕттĕмленнине наука вĕрентнĕ пек ăнланманран, çав явленисем вĕсен ăстăнĕнче хăрушă шухăшсем çуратнăран, йывăр чирсемпе кĕрешме пĕлменрен килнĕ.

ССР Союзĕнчи ытти нумай халăхсенни пекех, чăвашсем хушшинче вăрмансенче пурăнакан вăй-хăвата—арçурие ĕненесси анлă сарăлнă. Тĕшмĕшлĕ çынсем ăнланнă тăрăх, арçури вăл — усал вăй-хăват, этем е чĕрчун евĕрлĕ пулать. Çак вăй-хăват вара хура вăрманта çулран çухалнă çыншăн пысăк хăрушлăх шутланать имĕш.

Арçурисене ĕненес ирсĕр тĕшмĕш халĕ те пĕтĕмĕшлех пĕтмен. Тĕшмĕшлĕ çынсем вăрманта арçури çухăрнине илтни е вăл ашкăннине курни çинчен каласа параççĕ. Çакна ăнланма йывăр мар ĕнтĕ: ку вăрманта тискер кайăксем улани е вĕçен кайăксем кăшкăрашни çеç пулма пултарнă, урăх нимĕн те мар.

Чăнах та, вăрманта кăшни сас-чĕв темĕнле хăрушшăн илтĕнет. Акă, тискер кайăксем çухăрашаççĕ— часах хăрушла сасă янăрама тытăнать. Паллах, шиклĕ çыншăн ку вăл — усал вăй-хăват ĕçĕ.

Чăвашсем хушшинче çемьене пулăшакан вăй-хă-

---

[1] «Канаш» хаçат, 1923 çулхи мартăн 2-мĕшĕ.
[2] «Канаш» хаçат, 1927 çулхи июлĕн 2-мĕшĕ.

ватсемпе турăшсене (йĕрĕхе, хĕртсурта, пирĕштие т. ыт. те) ĕненесси те чылая пынă. Çак тĕшмĕшсем ĕлĕк-авал йăхсен стройĕ вăхăтĕнче, матриархат пуçпулса тăнă чухне пуçланса кайнă. Кунта матриархатла йăхсем хушшинчи çыхăнусен уйрăмлăхĕсем те чылай пысăк вырăн йышăннă. Çынсем таврара хăйсене пулăшакан вăйсене шыранă. Анчах та унашкал вăйсене çĕр çинче часах тупайман пирки вĕсем ирĕксĕрех тĕрлĕрен вăй-хăватсем пулăшасса ĕненме пуçланă.

Тĕшмĕшлĕ çынсем шухăшланă тăрăх, йĕрĕх вăл — пĕр-пĕр йăх çыннисене пулăшакан вăй-хăват имĕш. Хăшпĕр вырăнсенче йăхсен йĕрĕх йывăççисене халĕ те курма пулать. Нумаях пулмасть-ха вĕсем çине кунтăксем çакса янă, кĕлтунă чухне вара унта апат-çимĕç хура-хура хăварнă. Ĕненекенсен шучĕпе йĕрĕх патĕнче шавлама е вăрçма, ăна ачасене кăтартма юрамасть т. ыт. те. Çак йĕркесене пăхăнман çынсене чир çыпăçать имĕш, унран хăтăлас тесен, йĕрĕхе парне (çăкăр, кĕсел т. ыт. те) памалла, тенĕ. Йĕрĕх тĕшмĕшĕ çирĕп пулни çак тĕслĕхрен те лайăх курăнать. Ĕлĕк пĕр хĕр те йĕрĕхсĕр качча тухман. Ашшĕ килĕнчен тухса кайнă чухне çамрăк хĕр, алăк янахĕ çине тăрса, çапла каласа макăрнă:

Йĕрĕх парсан каятăп,
Алăк çинчен анатăп.
Памасан тухмастăп...

Çакăн хыççăн ăна хурама хуппинчен тунă пуракра ларакан йĕрĕх пукани тыттарнă: «Акă сана йĕрĕх», тенĕ. Качча тухакан хĕршĕн вара йĕрĕх тăван турăш пулса тăнă темелле.

Пирĕн вăхăтра йĕрĕхе ĕненесси пĕтсех пырать. Хăшпĕр тĕшмĕшлĕ ватă хĕрарăмсем çеç йĕрĕхсене çаплах ĕненеççĕ, ăна чирсем саракан вăй-хăват тесе шутлаççĕ.

Çемьене е хуçалăха хŷтĕлекен тепĕр вăй-хăвата — хĕртсурта ĕненес тĕшмĕшлĕх паян кун та пĕтмен-ха. Хăшĕ-пĕрисем ăна курнă та теççĕ. Вĕсем каласа панă тăрăх, çак вăй-хăват хĕрарăм евĕрлĕ, вăл кăмака хыçĕнче кĕнчеле арласа пурăнать имĕш. Теприсем, пачах урăхла, хĕртсурта арçын теççĕ. Тăвай районĕнчи Тенеляльĕнче пурăнакан çынсенчен пĕри хĕртсурта ватă

старик тесе шутлать. Ку таврари çынсем: хĕртсурт куçа курăнсан, инкек пуласса кĕтсех тăр, теççĕ. Кунашкал калаçнисене ялсенче тăтăшах илтме пулать. Кил-çуртра тасалăх, йĕрке пулмасан, ваттисем: «Кунта хĕртсурт çук, кунтан хĕртсурт тарнă», теççĕ. Вĕсен шучĕпе хĕртсурт вăл— килти йĕркелĕхпе тасалăх хуралçи.

Тĕшмĕшлĕ çынсен хĕртсурта кĕлтăвас йăла та пур. Çулран е хăнаран таврăнсан, хăшĕ-пĕрисем паян кун та кăмака хыçне хĕртсурт валли мĕнле те пулин çимĕç пăрахаççĕ.

Тĕшмĕшлĕ чăвашсем тата пирĕшти ятлă вăй-хăвата ĕненеççĕ. Вĕсен шучĕпе пирĕшти вăл — усал-тĕселтен хуйăлекен вăй-хăват. Вăл çын ăшĕнче пурăнакан пĕчĕк те шурă, таса чĕрчун имĕш. Çывăрнă чухне çеç вăл ăшран тухать-мĕн.

Çынна хуйăлекен вăй-хăватсене ĕненни чылайăшне обществăри пурнăç явленийĕсене тĕрĕс ăнланма чăрмантарнă. Кунашкал тĕшмĕшлĕ çынсем хăйсене кичеммĕн тытаççĕ, хуçалăхри е обществăри тĕрлĕ ыйтусене хăюллăн татса памалла чухне активлăха çухатаççĕ.

Вăтам Атăл таврашĕнчи вак халăхсем пекех, чăвашсем те усал та хаяр, этеме сиен кӳрекен вăй-хăватсене — киремете, эсреле, шуйттана т. ыт. те ĕненнĕ. Кунашкал тĕшмĕшлĕхпе, шел пулин те, халĕ те тĕл пулма тивет. Куславкка районĕнчи Маслă ялĕнче пурăнакан ватă çынсем В. Магницкий хăйĕн 1881 çулта пичетленсе тухнă «Чăвашсен кивĕ ĕненĕвĕсене ăнлантарса паракан материалсем» ятлă кĕнекинче çырса кăтартнă Мелим хуçа, Авански, Кивĕ ял тата ытти киреметсене халĕ те манмаççĕ; Тăвай районĕнчи Чӳкçырми таврашĕнче Ахпӳрт, Чĕке ту, Киремет айĕ, Салавай тăвайкки текен киремет ячĕсем паян кунччен те упранса юлнă.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Туканашра Киремет тăвĕ пур. Кунтан иртсе каякан çула Киремет ай çулĕ теççĕ. Çемьере кам та пулин чирлесен е хуçалăхри выльăх сусăрлансан, çынсем юмăç сĕннипе çакăнта килсе чӳк тунă. Кунта вара çăмарта, укçа, пир-авăр тата ытти япаласем купипех пухăннă. Çавнашкал япаласене кивĕ çăпата ăшне хурса киремет патне илсе пыракан çул çинчи вăрман умне пыра-пыра пăрахнă. Кунтан

нумайăшĕ йывăç çаппине те илсе кайма хăранă. Инкек сиксе ан тухтăр тесе, тĕшмĕшлĕ çынсем хăйсен ачисене çав вăрмана кĕме, унта выльăх çӳретме те хушман.

Çак тĕшмĕшлĕх нумая пыни чи малтанах колхозри активпа атеистсем унпа çине тăрса кĕрешменнинчен килнĕ. 1931—1932 çулсенче колхоз председателĕ В. А. Кудряев, çак тĕшмĕше тĕп тăвас тесе, вăрмана касса тăкма хушнă. Хăй çак вăхăтра сасартăк чирлесе ӳкнĕ. Çакна илтсенех йывăç касма пынă çынсем киреметрен хăраса ӳкнĕ те ĕçе пăрахса килĕсене саланнă. Паллах, колхоз председателĕн чирĕ вăрман каснинчен килмен ĕнтĕ. Киремет вăрманне касни, çын чирлесе ӳкни — икĕ тĕрлĕ явлени. Анчах та вĕсем ăнсăртран çеç пĕр вăхăтра пулса тухнă. Çапла пулин те, тĕшмĕшлĕ çынсем председателе киремет тытнă тесе ăнланнă.

Кунашкал киреметсем, шел пулин те, ытти çĕрте те тĕл пулкалаççĕ. Тăвай районĕнчи Лачкасси ялĕнче (кунта тĕне кĕмен чăвашсем нумай пурăнаççĕ), акă, Лачкас киремет пур. Вăл Ефрем Григорьев колхозник пахчинчи пысăк тунката шутланать. Халĕ ĕнтĕ унта парнесем пырса пăрахакансем çукпа пĕрех, çавăнпа ку киремете çынсем манса пыраççĕ.



Лачкас киремет тункати.

Язычниксем пурăнакан тепĕр ялта — Йĕпреç районĕнчи Вăтаелте — темиçе çул каялла Кăмакал çырми, Хăм çырми киреметсене чӳк туса пурăннă. Шăмăршă районĕнчи Виçпӳрт Шăмăршăра Çĕн-ырă сĕтел киремет паллă пулнă. Тĕне кĕмен хĕрарăмсенчен хăшĕ-

пĕрисем унта халĕ те пырса çӳреççĕ. Кунти курăк пусса кайнă киремет участокне хресченсем чылайччен сухаламасăр тăнă.

Куславкка районĕнчи Куснар тата Вăрмар районĕнчи Тупах ялĕсенчи тĕшмĕшлĕ çынсем Куснар киремечĕпе Тупах киреметне ĕненсе пурăннă. Вĕсем шутланă тăрăх, икĕ киремет пĕр-пĕринпе килĕштермен иккен, уйрăмах калăм каç хирĕçнĕ-мĕн.

Мари тата Чăваш республикисен чиккисенче вырнаçнă Амаксар тата Исменец киремечĕсем пирки те пĕлме интереслĕ. Амаксар Атăл çинчи Шашкар пристанне хирĕç вырнаçнă. Çакăнти тӳпем вырăнта ĕлĕкрех çӳллĕ-çӳллĕ хыр ӳснĕ (халĕ унăн тункати çеç тăрса юлнă) пулнă. Ун вырăнне кайран хурăн шăтса тухнă. Ку таврари тĕшмĕшлĕ мариецсемпе чăвашсем çак хурăн патĕнче усал вăй-хăват пурăнать тесе шутлаççĕ. Çавăнпа кунта кама та пулин ятлама, кулма-ахăрма, вильăхсем çӳретме юрамасть теççĕ. Çемьере кам та пулин чирлесен е килти вильăх-чĕрлĕх сусăрлансан вара Амаксар киремечĕ тытнă тесе шутлаççĕ. Вăл ан тыттăр тесе, çак вырăна укçа, пир-авăр, улăмран тунă пуканесем, çип тата ытти япаласем илсе килеççĕ. Хăшĕ-пĕрисем тата хăйсем курайман çынсен сăнӳкерчĕкĕсене пырса пăрахаççĕ. Амаксар ăна вĕлертĕр, теççĕ. Амаксара пĕрре пырса чӳкленисен ăна ĕмĕрех хисеплемелле иккен, унсăрăн вăл тыталъ имĕш.

Киремете ĕненни е унта пырса чӳклени паянхи кунсенче сайра хутра çеç тĕл пулать. Киремете Христоспа пĕр тан шутлакан карчăксем те питĕ сахал. Ку тĕшмĕше чăвашсем хушшинче юмăçсемпе вĕрӳçĕсем çеç ытларах ĕненеççĕ.

Паянхи условисенче ку тĕшмĕшлĕхе тытăнса тăма нимĕнле сăлтав та çук. Вăл ултавлă пулнине, чӳклени нимĕн усă та паманнине çынсем хăйсен пурнăç опытĕнчен лайăх курса тăраççĕ. Муркаш районĕнчи Шатракасси ялĕнчи Е. Ялушкина колхозница, хĕрĕ чирлесе ӳксен, турра пайтах кĕлтунă, тĕрлĕ вăй-хăватсем патне, çавăн пекех Амаксар патне те пĕрре кăна мар çӳренĕ. Мĕн чухлĕ чӳк тунă вăл, хăйĕн хĕрне чиртен сыватма ыйтнă. Анчах турă та, киремет те пулăшман, хĕрĕ вилсе кайнă. Çакăн пек пысăк хуйхă тӳссе иртернĕ хыççăн вăл тинех тĕшмĕшлĕх ултавлă та сиенлĕ пулнине ăнланса илнĕ, тĕн сĕрĕмĕнчен хăтăлас çул

çине тăнă. Текех вăл Амаксара çеç мар, нимĕнле вăй-хăвата та, турра та ĕненмест.

Тĕшмĕшлĕ çынсемшĕн çӳлти турăпа ăна пăхăнса тăракан пĕчĕк турăшсем уйрăмах пысăк вăй-хăватсем шутланнă. Ку вăл тĕнче уçлăхĕнчи явленисем çынсен ăстăнĕнче фантастикăллă ăнланусем патне илсе пынинчен нумай килнĕ.

Турра ĕненекен чăвашсем хушшинче язычниксен çӳлти туррине пуççапакансем халĕ те пур-ха. Тăвай районĕнчи Тенеяльте пурăнакан Александров колхозник каланă тăрăх, çӳлти турă вăл — кăвак пĕлĕт, вăл пирĕнтен инçетре-инçетре тăрать. Çак тĕп турă сăнсăпатлă мар. «Пирĕн турă—ырă сывлăш... Этемрен турă пулма пултараймасть. Çавăнпа сирĕн Христоса ĕненме май çук ĕнтĕ»,— тет вăл. Йĕпреç районĕнчи Вăтаел çынни Тухтач Ишметов тĕп турă вăл—çӳлти турă тесе шутлать. Вăл ăнланнă тăрăх, Христос çуралман та, вилмен те.

Ватă çынсем уй-хирти, кил хушшинчи ĕçсене пуçăнас умĕн, апата лариччен, çывăрма выртиччен е ирпе вырăн çинчен тăрсан, яланах çӳлти турра кĕлтăваççĕ. Кунта кĕлтăвас йĕрке пачах урăхла: христианла хĕрес хурас вырăнне хĕвелтухăçнелле пуç тайса турăран мĕн кирлине ыйтаççĕ.

Ватă çынсенчен нумайăшĕ халĕ ĕнтĕ тĕрлĕ вăй-хăватсемпе турăшсене манса пырать. Акă, сăмахран, Тăвай районĕнчи Тенеяльти çитмĕл çулхи С. Афанасьев тĕрлĕ киреметсене, хĕртсурта тата ытти вăй-хăватсене ĕненме пăрахнă, çӳлти турă пирки те иккĕленет. Çавна май вăл колхоз клубĕнче ирттерекен лекцисемпе докладсене тăтăшах çӳрет. Анчах наукăллă-атеизмлă пĕлӳ унăн халлĕхе çитсех каймасть-ха: «Турă лур-и, çук-и—тĕрĕссине пĕлместĕп,—тет вăл.—Турă пирки япăх калаçма, ăна ятлаçма çапах та юрамастех». Ку вăл ватă çын туррăран çаплах хăраса тăнине, иккĕленнине кăтартса парать.

Социализм тунă çулсенче тата коммунизм туса пынă тапхăрта ĕççыннисенчен нумайăшĕ тĕн сĕрĕмĕпе тĕшмĕшлĕхĕсенчен хăтăлчĕç. Хальхи чăвашсем калаçнă чухне усал-тĕсел, усал вăй-хăват, усал çын, усал выльăх сăмахсемпе усă кураççĕ пулин те, ку сăмахсемпе вĕсем усал пулнине аса илмеççĕ. Тĕслĕхрен, хаяр çынна усал çын, тискер выльăха усал выльăх, çил-тă-

вăла усал çил-тăвăл теççĕ. Усал сăмаха теприсем вăрçнă-ятланă чухне калаççĕ: «Эх, усал!». Усал сăмах вăй-хăватсене ĕненнипе çыхăннă пулин те, кунта тĕшмĕшле шухăшсем пачах çук. Тĕшмĕшлĕ çынсем çеç ку сăмах пĕлтерĕшне урăхла ăнланаççĕ. Вĕсенчен час-часах çапла каланисене илтме пулать: усал куртăм, усал вырăн, усал-тĕсел, усал тытнă, усал перет т. ыт. те. Çапла вара, хăшпĕр çынсен ăстăнĕнче усал е ырă вăй-хăватсене тата турра ĕненесси халĕ те пур. Анчах вăхăт иртнĕçемĕн çынсем турă пирки иккĕленме пуçлаççĕ. «Те пур, те çук, кам пĕлет. Турă пуррине кам та пулин курнă-ши?»—терĕ пире хăйпе калаçнă чухне Çĕрпÿ районĕнчи «Путь Ильича» колхоз членĕ М. Архипов. Теприсем тата турă пур, анчах вăл ăçтине пĕлместпĕр теççĕ.

«Турра ĕненме пуçличчен малтан вăл пуррипе çуккине тĕрĕслесе пăхмалла»,—тенĕ ваттисен сăмахĕнче. Турра ĕненекенсенчен нумайăшĕ халĕ ĕнтĕ шăпах çапла тăвать те. Хăйсен пурнăçĕнчи опыта тата наука вĕрентĕвĕсене шута илсе, вĕсем халиччен ăнланман нумай ыйтусем çине тивĕçлĕ ответсем тупаççĕ. Тĕн çине критикăлла пăхни, кашнин пĕтĕмĕшле пĕлĕвĕсемпе политикăлла пĕлĕвĕсен шайĕ кунсерен ÿссе пыни паянхи совет çыннисене тĕн тĕшмĕшĕсенчен майĕпен хăтăлма пулăшать.

Тĕшмĕшлĕхсем паян кун та пĕтмен ялсемпе хуласенче общественноçăн тĕн сиенлĕхне çине тăрсах тăрă шыв çине кăлармалла, ырă е усал вăй-хăватсем пулма пултарайманнине пурнăçран илнĕ тĕслĕхсемпе çирĕплетсе памалла. Пысăк опытлă атеистсем витĕмлĕ калаçусем ирттерни тĕн тĕшмĕшлĕхне хирĕç кĕрешес ĕçре пысăк ăнăçу кÿрет, мĕншĕн тесен тĕшмĕшлĕ çынсем вĕсен кашни сăмахне тимлесе итлеççĕ.

Чун тата леш тĕнче пур-и?

Чун пур-и? Леш тĕнче пур-и? Çак ыйтусем çынсене темиçе пин çул хушши канăç памаççĕ ĕнтĕ. Мĕншĕн чунпа леш тĕнче пирки тахçантанпах пысăк тавлашусем пыраççĕ-ха?

Кашни халăхăнах тĕшмĕшлĕ çынсем хушшинче чуна, леш тĕнче пуррине ĕненекенсем пулнă. Вĕсене эпир турра ĕненекенсемпе иккĕленекенсем шутне кĕртнĕччĕ. Анчах тĕрлĕ тĕне ĕненекенсем леш тĕнчене тĕрлĕ ăнланаççĕ.

Кĕнекен ку пайĕнче эпир турра ĕненекен чăвашсем леш тĕнчене мĕнле ăнланнни тата çак тĕшмĕшлĕх паянхи кунсенче мĕнле пĕтсе пыни çинчен калаçу пуçарăпăр.

Этемĕн чунĕ пуррине тĕшмĕшлĕ чăвашсем мĕн авалтанпах ĕненнĕ. Вĕсем, тĕнчери ытти халăхсем пекех, «хăйсен ӳт-пĕвĕ мĕнрен тăнине ăнланман, тĕлĕк мĕн иккенне пĕлмен, çавна май шухăшланине, туйнине вĕсем хăйсен ӳт-пĕвĕнчен мар, чун пурринчен килет, çав чун вара этем ăшĕнче пурăнать, вăл вилсен, унтан тухса каять тесе шутланă» [1].

Чăвашсем ăнланнă тăрăх, чун вăл темĕнле пĕчĕк чĕрчун евĕр. Пурнăçпа ăстăн вара пĕтĕмпех çавăнтан килет имĕш. Чун ăшран вăхăтлăха тухсан,—çын сывăрать, яланлăхах тухса кайсан — вилет, тенĕ вĕсем. Яланлăхах тухса кайнă чухне чун пуç патне лартнă чашăкри шывра çăвăнать те леш тĕнчене пырса кĕрет имĕш.

Каярахпа, ытти тĕнсенче вĕрентнĕ пек, чăвашсем чуна ĕненесси улшăнса пынă. Вĕсем ăна куса куранман вăй-хăват тесе шутлама пуçланă.

Ĕненекен чăвашсем леш тĕнчене те, хăйсене май, урăхла ăнланнă. Нумайăшĕ христианство тĕнĕнчи райпа тамăка ĕненмен. Православи тĕнне тин йышăннисем те леш тĕнче вăл масар таврашĕнче, çĕр айĕнче çеç тесе шутланă. Турра ĕненекенсен шучĕпе леш тĕнчери пурнăç вăл — çĕр çинчи пурнăçăн малалли тапхăрĕ, унта та çынсем пĕр тан мар: пĕрисем пуян, теприсем чухăн; ку вара çĕр çинче вĕсен социаллă положени мĕнле пулнинчен мар, вĕсене тăванĕсем леш тĕнчене мĕнле пурлăхпа ăсатнинчен килет имĕш. Çын чунĕ, тĕшмĕшлисем калашле, унта çĕр çинчи хăнăхусемпе е йăласемпех пурăнать. Çавăнпа вилнисене асăнас е ĕçтерес-тăрантарас йăла пур. Çапла шухăшланă ĕнтĕ этем леш тĕнче çинчен.

Чăвашсенчен нумайăшĕ Октябрь революцинченех тĕне ытла вăйлах ĕненменнине палăртмалла. Чун тата леш тĕнче пирки вĕсем питех хускалман. «Леш тĕнчере пирĕнтен хăть çуна тупанĕ туса чупчăр»,— тенĕ вĕсем.

---

[1] К. Маркс, Ф. Энгельс. Тĕн çинчен, 175 стр.

Леш тĕнче пирки архаизмла ăнланасси Совет влаçĕ çулĕсенче пĕтсе ларнăпа пĕрех. Анчах хутла сахалрах вĕреннисем, уйрăмах ватă çынсем, чунпа леш тĕнче пуррине ĕненме çаплах пăрахман-ха. Унашкаллисен вара тĕрлĕ тĕшмĕшсем сахал мар. Акă, сăмахран, çын мĕлке (ку вăл чун сăн-сăпачĕ имĕш) çине таптасан, вăл чирлесе ӳкме пултарать, теççĕ. Тĕкĕр ӳксе вансан, ырă пулмасть имĕш.

Час-часах пиртен: «Кунашкал тĕшмĕшлĕх мĕншĕн пирĕн ĕмĕрте те пĕтмест-ха?»— тесе ыйтаççĕ. Çынсен пĕр пайĕ этем мĕншĕн вилнине, чирленине, тăнран кайнине, тĕлĕк курнине е тата сасă каялла илтĕннине, çын мĕлки мĕн иккенне материализмла тавçăрса ăнланаймасть. Çавăнпа ĕлĕк-авал асаттесем чун пур, вăл ăшран тухса кайма тата каялла килсе кĕме пултарать тенĕ суялăха унашкал çынсем çаплах ĕненеççĕ.

Вилĕм, паллах, кашни çынна, уйрăмах тĕшмĕшлĕ ватă çынсене шиклентерет. Пурнăç интересне, унăн савăкне туйса илнĕ çыннăн вилес килмест ĕнтĕ. Пуп таврашĕсем çынсен çак туйăмĕпе усă кураççĕ те. Турра ĕненекенсем, вилсен, леш тĕнчере çĕр çинчи пурнăçран та лайăхрах пурăнма пуçлаççĕ тесе лăплантараççĕ вĕсем. Çак суя сăмахсене час-часах ваттисем хытă ĕненеççĕ. Вăл суя сăмах пулнине кăтартса пама, чăнах та, çăмăлах мар ĕнтĕ.

Тĕшмĕшлĕ çынсен шучĕпе этем вилни вăл унăн чунĕ леш тĕнчене тухса кайнинчен килет-мĕн. Вилнĕ çынна пытарнă чухне çавăнпа ĕнтĕ ăна çĕнĕлле пурнăçа лайăхрах хатĕрлесе ăсатма тăрăшаççĕ. Сăмахран, Тăвай районĕнчи Тенеяльте тĕне кĕмен Егор Пимулин чăваша вилсен мĕнле пытарни çинчен унăн тăванĕ пире çапла каласа пачĕ: «Чирлĕ çын вилес патне çитсен, ун пуçĕ умне алтăрпа таса шыв лартрĕç. Вилсе кайсан, ун пуçĕ çийĕнче çăмарта ватрĕç те ăна урамалла тухса печĕç. Унтан шыва кĕртрĕç, хăй юратнă таса кĕпе-йĕм тăхăнтарчĕç. Çакăн хыççăн ачисем ăна тупăка выртгарчĕç, унта ĕç хатĕрĕсем, укçа тата тĕрлĕ япаласем хучĕç. Вилнĕ çынна асăнма яшка, пĕлĕм пĕçерчĕç, эрех-сăра т. ыт. те илсе пычĕç. Пурне те хатĕрленĕ хыççăн вилене асăнчĕç те, урисемпе малалла тытса, тупăка пӳртрен илсе тухрĕç. Çав вăхăтра хĕрарăмсем тăршшипе макăрнă сасă илтĕнчĕ. Ăна «сасă кăларни» теççĕ. Кайран вара тупăка, лав çине хурса, масар çине



Тăвай районĕнчи Тенеяльти кивĕ масар.

илсе кайрĕç. Масар çине çитсен, шăтăка укçасем пăрахрĕç те унта тупăка майĕпен антарчĕç. Пытарма пынисем пĕрер ывăç тăпра сапрĕç, вара кĕреçесемпе тăпра тултарчĕç. Тĕмеске çинче вилен урисем патне юман юпа лартрĕç. Ун çине «Пимулин Е. Г. 1888—1956» — тесе çырнă».

Тĕшмĕшлĕ çыншăн виле пытарнă чухнехи çак йĕркесенче кашнин хăйĕн пĕлтерĕшĕ пур. Калăпăр, вилес патне çитнĕ çын пуçĕ патне чашăкпа шыв лартаççĕ. Ку йăла ăшран тухакан чуна çăвăнса тасалма кирлĕ иккен. Вилекен çыннăн чунĕ ирĕккĕн тухма пултартăр тесе, кĕпи тӳмисене вĕçертсе яраççĕ. Тупăка хуракан тĕрлĕ япаласем, укçа леш тĕнчере пурăнма кирлĕ теççĕ. Масар çинче шăтăка укçа пăрахни масар пуçне шăтăкшăн укçа тӳленине пĕлтерет. Вилесене çакăн пек йăлапа пытарнине халĕ те нумай çĕрте курма пулать.

Православи тĕнне ĕненекенсен вилесене пытарнă чухнехи йăлисенче урăх тĕрлисем сахал: вилекен

çынна çылăх каçарттараççĕ, вилсен турăш умне çурта лартаççĕ те псаломсем вулаççĕ. Ытти енчен илсен вара виле пытарнă чухнехи йăласем тĕне кĕмен чăвашсен йăлисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмаççĕ.

Виле пытарнă чухне çынсем унран çав тери хăраççĕ. Ăна шыва кĕртнĕ чухне унăн ӳтне çара алăпа тытасшăн мар. Вилнĕ çыннăн япалисене, тупăк тунă чухне тухнă турпассене, ӳтне çунă мунчалана час-часах çунтарса яраççĕ, çырмана е масар çине тухса пăрахаççĕ. Масар çинчен таврăнсан, пытарăва хутшăннисем пурте мунчара çăвăнаççĕ.

Тĕшмĕшлĕ çынсем вилерен ялан хăраса пурăнаççĕ. Сăмахран, пĕр-пĕр килте кам та пулин вилнĕ пулсан, хăшпĕр çынсем вара ун умĕнчен шикленсе иртсе каяççĕ: вилнĕ çыннăн чунĕ килсе шаккать, япаласене илеиле пăрахать, алăка уçа-уçа хупать имĕш.

Тĕшмĕшлĕ çынсем уйрăмах ырă вилĕмпе вилмен çынсенчен хăраççĕ. Хĕвелтухăçĕнчи славянсем вĕсен шутне хăйсене хăйсем вĕлернисене, шыва путнисене, ĕçсе вилнисене, тĕне кĕмен ачасене т. ыт. те кĕртеççĕ. Вилнĕ тухатмăшсене, асамҫăсене, пурăннă чухне усал вăй-хăватсене пĕлсе тăнă çынсен виллисене усал вилесем теççĕ.

Тĕшмĕшлĕ чăвашсем усал вилесене халĕ те ĕненеççĕ. Вĕсем ăнланнă тăрăх, ырă мар вилĕмпе вилнисен чунĕсенчен усалсем çуралаççĕ имĕш, çав усалсем вара этеме, выльăх-чĕрлĕхе, тырпула сиен кӳреççĕ-мĕн. Темиçе çул каялла, çапла, Куславкка районĕнчи Туканашра пĕр хĕрача çакăнса вилнĕ пулнă. Таврари ялсенче вара часах çакăн пек сăмах тухса кайнă: çакăнса вилнĕ хĕрача чунĕнчен усал пулса кайнă, вăл çынсене хăратать, çулран пăрса ярать т. ыт. те.

Çав районтах Маслă тата Шăнчас ялĕсенче вилнисен чунĕсенчен арçурисем пулса тухаççĕ текен тĕшмĕш çӳрет. Хăшпĕр çĕрте шыва путса вилнисен чунĕсенчен шыври усалсем пулаççĕ тесе ĕненеççĕ.

Тĕшмĕшлĕ çынсемшĕн, çапла ĕнтĕ, икĕ тĕрлĕ вилесем пулаççĕ: пĕрисем — ырă вилĕмпе, теприсем—усал вилĕмпе вилнисем. Анчах вĕсемшĕн иккĕшĕ те хăрушла тата сиенлĕ шутланнă. Паллах ĕнтĕ, хăравçă çын тĕшмĕше пăхăнса тăнă, ăна çĕнтерме пултарайман.

Совет общественноçе çакăн пек сиенлĕ тĕшмĕшлĕхпе çине тăрса кĕрешет. Анчах ялти активистсенчен

хăшĕ-пĕрисем тепĕр чухне хăйсем те тĕшмĕшлисен йăлисене пăхăнаççĕ.

Çак тĕшмĕшсем халĕ те упранасси анатри чăвашсен — кив масарсем, тури чăвашсен — кив çăвасем пурринчен те нумай килет. Христианла масарсемсĕр пуçне пирĕн республика территорийĕнче кив масарсем — чăваш масарĕсем тĕл пулаççĕ. Кунашкал çăвасем Куславкка районĕнче — Шăнчасра, Вăрмар районĕнче — Шăхальте, Тăвай районĕнче—Тенеяльте, Чӳкçырминче, Лачкассинче, Йĕпреç районĕнче — Вăтаелте, Комсомольски районĕнче — Виçпӳртре пур. Тĕшмĕшлĕ çынсем, çак ялсенчи кив çăвасем çине пырса, вилнисен чунĕсене час-часах апатлантараççĕ.

Вăрмар районĕнчи Шăхальти кив масар çинчен пĕлме интереслĕ. Кунта йывăçран тунă 13 юпа тата чулран тунă 3 пысăк плита сыхланса юлнă. Вĕсем çинче араб чĕлхипе çырнă сăмахсем пур. Кунта, язычниксен йăлисене пăхăнса, вилесене йăхăн-йăхăн пытарнă. Масарăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче, сăмахран, Чесноковсен йăхĕнчен тухнă вилесене пытарнă. «Чесноков Сергей, Петров М., 1948 августăн 8-мĕшĕ»,—тесе çырнă пĕр тĕмескери юпа çине. Ытти тĕмескесем çинче те çавнашкал çырнисемех пур. Кунта «М» евĕр буква çырни пур. Çакна йăх палли—тамга теççĕ. Тамга йăларан тухнă ĕнтĕ. Вĕсем кивĕ юпасем çинче çех сыхланса юлнă. Язычниксем шутланă тăрăх, çынсем леш тĕнчере те йăхăн-йăхăн пĕрлешсе пурăнаççĕ, çавăнпа та вĕсем çĕр çинчех тамгасемпе усă курнă.

Вилесен чунĕсене тарăхтарас мар тесе, тĕшмĕшлĕ çынсем масар çинче хыттăн калаçма та хăраççĕ. Çавăнпа кивĕ масарсене, авалхи масарсене, ĕлĕкхи çăвасене, вĕсем хресченсен анисем таврашĕнче пулнă пулсан та, ĕмĕр-ĕмĕрĕпе никам та пырса тĕкĕнмен. Кивĕ масарсемпе çăвасем уйри ĕçсенче ялхуçалăх техникипе усă курнă чухне халĕ те чăрмантарса тăраççĕ. Тĕслĕхрен, Тăвай районĕнчи Лачкассинчи авалхи масар, çапла, чылайччен уйра техникăпа ĕçлеме чăрмантарнă. Анчах хресченсем ăна сухаласа пăрахма килĕшмен.

Чылай çĕрте вырăнти масарсемпе тĕрлĕ тĕшмĕшсем сыхăннă. Çынсем унта турра кĕлтума, вилнисен чунĕсене апатлантарма çӳреççĕ. Анчах халăхра нумайăшĕ,

масарсемпе çăвасем çинче тĕн йăлисене пăхăнаççĕ пулин те, çав йăласен пĕлтерĕшне пачах ăнланмаççĕ. Халĕ ĕнтĕ тĕне ĕненменнисем масар çинчи вилтăпри çине хĕрес е юпа мар, палăк лартаççĕ. Çапла ĕнтĕ, çĕнни киввине майĕпен çĕнтерсе пырать.

Тĕшмĕшлĕ çынсем вилнĕ çыннăн чунĕ шыв та ĕçет, апат та çиет тесе шутлаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ вĕсем, масар е çăва çине кайса, вилнисене уйрăммăн е пĕтĕмĕшле йăхпа асăнаççĕ, апат-çимĕç хурса параççĕ.

Тĕшмĕшле асăну йăлисем майĕпен пĕтсе пыраççĕ. Кун пирки нумай тĕслĕхсем илсе кăтартма пулать. Акă, Куславкка районĕнчи Чашламара вилнисене асăнма чĕннĕ чухне: «Çурта айне сăра ĕçмешкĕн пырăр»,— теççĕ. Тăван-пĕлĕшсем, кӳршĕсем пухăнаççĕ. Кашниех ĕçмелли-çимелли илсе пырать. Вилнĕ çынна хăйне те сĕтел хушшине чĕннĕ сăмах тăваççĕ. Вара ăна асăнса пурте ĕçеççĕ, çиеççĕ. Хĕрсе кайнă арçынсем шавлăн каласа тытăнаççĕ, вилнĕ çын çинчен мансах каяççĕ. Хĕрарăмсем çеç асăну юррисене юрлаççĕ: «Эй, çӳлти турă, каçарсам...» Нумай чухне вĕсем, юрă сăмахĕсене пĕлмесĕр, ахаль çеç ĕнĕрлеççĕ. «Атя юрĕ, мĕн пĕлнĕ пек юрлăпăр, пĕлменнишĕн каçартăр». Асăнма пынисем юлнă апат-çимĕçĕн пĕр пайне сĕтел айне лартнă витрене тултараççĕ те ял хыçне тухса пăрахаççĕ. Тул çутăлас умĕн вилнĕ çынна ăсатаççĕ, унтан пухăннисене пурне те ĕçтерме-çитерме тытăнаççĕ. Çапла вара, кунта тĕшмĕшленни питех курăнмасть, пухăннисем чылай йăласене вĕсен пĕлтерĕшне ăнланса мар, пурнăçри хăнăхăва кĕнине кура çеç пăхăнаççĕ.

Тĕплĕнрех сăнасан, вилнисене асăннă чухне асăннинчен ытларах çынсем вĕçĕмсĕр ĕçеççĕ кăна вĕт-ха. Çавăн чухне вĕсем асăну мĕнне те манаççĕ, хăйсем мĕншĕн ĕçсе ӳсĕрĕлнине те пĕлмеççĕ. Çакнашкал асăнусем пирки Н. Моторин хăйĕн «Атăлпа Кама таврашĕнчи халăхсен тĕнĕ» ятлă кĕнекинче питĕ тĕрĕс çырса кăтартать: «Язычниксен асăнăвĕсем христиансен вилнĕ çыннисене асăннă чухнехи йăлисемпе пĕр пек мар — кăшкăрса макăрнисем илтĕнмеççĕ, пачах та урăхла савăнăçлă юрăсем юрлаççĕ, вилнин тăванĕсем çĕрĕпе музыкăпа ташлаççĕ».

Вилнисене çапла пĕрле пухăнса ĕçсе-çисе асăнни хăшпĕр çĕрте паян кун та тĕл пулать. Чăваш хресченĕ коллективизаци пуçланичченех вилнисене кĕркунне

асăннă, вилнĕ тăванĕсене тырпул пуçтарса кĕртнĕшĕн, выльăх-чĕрлĕхĕ хунанăшăн, хăйсем сывă пулнăшăн тав тунă. Çакнашкал асăнăва юпа уйăхĕнче (октябрьте) ирттернĕ. Çак йăла тури чăвашсен кĕркунне ашшĕ-амăшĕсене асăннипе пĕрле хутшăнса кайнă. Христиансем ăна ваттисене асăнни теççĕ.

Пĕрле пухăнса ирттерекен асăнусенчен уйрăмах çуллахи асăну—çимĕк анлă сарăлнă. Тĕне кĕмен чăвашсем ăна ыттисенчен уйрăм, кун тавраниччен виçĕ кун малтан — юнкун ирттереççĕ. Ăна чăваш çимĕкĕ тесе ят панă.

Православи тĕнне ĕненекенсем е тепĕр чухне ĕненменнисем те çимĕке шăматкун, мункун иртнĕ хыççăн çичĕ эрнерен, троица умĕн паллă тăваççĕ. Уйрăм çемьенче пĕрисем çимĕке язычниксем пек, теприсем христианла паллă тăваççĕ.

Çапла пулин те, тĕне кĕнисен те, кĕменнисен те çимĕке ирттернĕ чухне пысăк уйрăмлăхсем çук. Православи тĕнне ĕненекенсен çимĕкĕ унта чиркӳ çыннисем пырса çӳренипе çеç урăхларах. Анатри чăвашсем халĕ те çимĕке — масар çине пĕтĕм çемьепе каяççĕ, унта ушкăнпа ĕçеççĕ-çиеççĕ.

Мĕн чухлĕ апат-çимĕç пĕтет çимĕкре! Кунсăр пуçне, мĕн чухлĕ çамрăк йывăçа хуçса-ватса пĕтереççĕ, вăрман хуçалăхне сиен кӳреççĕ, çырмасене ишĕлме пулăшаççĕ, урамсенчи симĕс курăка таптаççĕ. Çимĕксене ирттернĕ чухне чи сиенли вăл — унта кĕçĕн çулхи ачасем пĕрле пулни. Ĕçкĕ-çикĕпе шăв-шава кура вĕсен ăстăнĕ киревсĕр шухăшсемпе пăтранать вĕт-ха.

Чăвашсен кашни асăнурах пур йăласем те вилнин чунне апатлантарассипе, вĕсенчен пулăшу-ырлăх ыйтассипе çыхăнса тăраççĕ. Асăннă чухне хăйсен çывăх тăванĕсене çеç аса илеççĕ, тăван мар вилесен чунĕсене никам та асăнмасть. Çывăх тăванĕсемпе пĕлĕшĕсене асăннă чухне вилнисенчен хăрани е шикленни çук, вĕсене лăпкăн та хумханмасăр асăнаççĕ. Тĕшмĕшлĕ çын вилнин чунĕ валли апат-çимĕç илсе пынă пулсан, хăй вăл унран пурнăçра мĕнле те пулин пулăшу пама ӳкĕтлет, пурнăçра е ĕçре ан чăрмантар тесе ыйтать.

Вилене пытарнă чухнехи йăласене ваттисене асăннă чухнехи йăласемпе танлаштарсан, вĕсем пачах урăхла пулни курăнать. Вилнĕ çынна пытарнă чухне унăн чунĕнчен çав тери хăраççĕ, ваттисене асăннă

чухне вара ун пекки çук. Çакна ăнлантарса, «СССРти халăхсен этнографийĕ» ятлă кĕнекере С. А. Токарев юлташ çапла çырать: «Ку та, тепри те историллĕ тапхăрсенче пуçланса кайнă пулас. Вилесене пытарас йĕркене пĕтĕмĕшле архаизмла япала, вилнĕ çынран чăннипех хăранипе çыхăннă тахçан-авал тухса кайнă йăла пулсан, ваттисене асăнас йăла-йĕркесем чылай каярахпа пуçланса кайни курăнать»[1]. Чăвашсен тĕн йăлисем пирки те çаплах каламалла.

Халăхра нумайăшĕ текех ĕнтĕ чунпа леш тĕнче пуррине ĕненмест, виле пытарнă е ваттисене асăннă чухнехи тĕшмĕшле йăласене пăхăнмасть. Хăшĕ-пĕрисем каласа чухне чун, чунăм, чунăм çук, чун кӳрт, чун кантăр тата ытти сăмахсемпе усă курăççĕ пулин те, ку вăл тĕнпе çыхăннăран килмест. Турра пачах ĕненмен çынсем те унашкал сăмахсене мĕн ачаранах каласа çӳрĕ, анчах вĕсем мĕне пĕлтернине нимĕн те пĕлмеççĕ.

Чун пуррине ĕненни, вилнĕ çынсене пытарнă е ваттисене асăннă чухнехи йăла-йĕркесене пăхăнни тĕттĕм çынсемшĕн тĕнĕн сиенлĕ тĕшмĕшĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем тĕнчери тĕрлĕ вăй-хăватсемпе явленисене тӳнтерле, наука вĕрентнинчен урăхла ăнланаççĕ. Çак кивĕ йăласем уйрăмах эрех ĕçнипе паллă. Вилене пытараççĕ-и е ваттисене асăнаççĕ — пурпĕрех ĕçеççĕ, çапăçаççĕ. Ĕçекен çыншăн çав çавах —вăл хăть вилнисене асăнса, хăть чĕррисене сывлăх сунса ĕçет — ĕçсе кăна пултăр. Çапла ĕçсе супнипе вилнисене е ваттисене асăнни мар, пачах урăхла, вĕсенчен мăшкăллани, вĕсене кӳрентерни çеç пулса тухать.

Çын вилни — тăванĕсемпе тусĕсемшĕн яланах пысăк хуйхă. Ку туйăм вăл тĕне ĕненнинчен, тĕшмĕшлĕ пулнинчен килмест. Çын вилчĕ пулсан, урăх вăл ыррине те, усаллине те туймĕ — çакна нумайăшĕ лайăх ăнланать. Çавăнпа ăна кирек мĕнле пытарсан та пурпĕрех. Анчах чĕрĕ çынсемшĕн, тăванĕсемпе тусĕсемшĕн ун пек мар. Вилнĕ çынна вĕсем хисеплесе, чыслăн та йĕркеллĕн пытараççĕ.

Вилнисене тĕн йĕркипе пытарассине Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенчех сивленĕ, гражданла пытарас

---

[1] С. А. Токарев. СССРти халăхсен этнографийĕ. Мускаври университет кăларнă, 1958, 159 стр.

çĕнĕ йĕркесем пурнăçа кĕрсе пынă. Вилнĕ юлташĕсене хисеплесе, вĕсен вилтăприсем çине палăксем лартма пуçланă. Граждан вăрçинче пулнисене, революционерккоммунистсене çапла пытарнă. Вĕсен палăкĕсем патне совет çыннисем час-часах çӳреççĕ, халăх ĕçĕшĕн кĕрешнĕ çынна хисеп туса пуç таяççĕ, чĕрĕ чечек кăшăлĕсем хурса чыслаççĕ.

Вилнĕ тăванĕсене çынсем нихçан та манмаççĕ. Чылайăшĕ вилтăпри çине йывăçсем е чечексем лартса типтерлĕ ӳстерет пулсан, ку вăл тĕн тĕшмĕшĕ мар.

Эпир çĕнĕ, коммунизмлă общество тăватпăр. Çавăнпа, чун пур, леш тĕнче пур тесе ĕненсе, тĕн йăлисене пăхăннипе килĕшсе тăма пултараймастпăр.

Паянхи пур тĕрлĕ тĕнсен вĕрентĕвне — чунпа леш тĕнче пурри çинчен калакан халапа наука тахçанах çапса хуçнă ĕнтĕ. Этемĕн психикăллă енĕсене тарăн тĕпченĕ май И. П. Павлов чун тени вăл этем организмĕнче физиологилле процессен — ăстăнăн, шухăшланин, туйнин, тавçăрнин кăткăс комплексĕ пулнине ĕнентерӳллĕ кăтартса панă. Материалистсем вилĕме теменле тĕлĕнмелле, çут тĕнчере çук япала мар, вăл физиологилле явлени, ӳт пурнăçĕ татăлни, этем организмĕнче япаласем улшăнма пăрахни пулать, тесе ăнлантараççĕ.

Медицина тунă çитĕнӳсем те пуп таврашĕсем чунпа леш тĕнче пур тесе ĕненнине яр-уççăн çапса хуçаççĕ. Совет науки этем вăхăтсăр вилессине хирĕç вирлĕ кĕрешет. Ку тĕлĕшпе пирĕн çĕршывра тĕлĕнмелле пысăк çитĕнӳсем тунă.

Авалхи тĕн йăлисен юлашкисем

Усал е ырă хăватсене ĕненни çынсене тĕрлĕрен тĕшмĕшлĕ тĕн йăлисем (маги) патне илсе пынă. Çавнашкал тĕшмĕшлĕ çынсем шухăшланă тăрăх, çутçанталăк вăйĕсене куç пăвса, тухатса пăхăнтарма пулать имĕш.

Авалхи чăвашсемшĕн тĕн йăлисем (маги) уявлă ĕç мар. Кашни тĕн йăлин хăйĕн уйрăм пĕлтерĕшĕпе тĕллевĕ пулнă. Магилле хăшпĕр йăласене пурнăçласа, этем, сăмахран, кулленхи ĕç результачĕсене лайăхлатма ĕмĕтленнĕ. Наукăра кунашкал тĕн йăлисене ĕçпе çыхăннă маги тесе ят панă.

Авалхи çавнашкал кивĕ тĕн йăлисем чăвашсен уйхир ĕçĕпе тачă çыхăнса тăнă. Сăмахран, чи малтан

çĕр-амăшне плугпа мăшăрлантарнă йăла — Акатуй ирттернĕ. Çумăр çутăр тесе, çумăр чӳкĕ тунă. Çĕр пĕтĕçсен, «çине» юлать тесе шутланă. Çавна май çĕре тĕкĕнме-сухалама, çум çумлама юрамасть тенĕ. Тырпул ăнăçлă çитĕнтĕр, лайăх пиçсе çиттĕр тесе, пĕтĕм халăхпа уя тухса кĕлтунă. Ку йăлана уй чӳк тенĕ. Çакăн хыççăн та тырпул ăнăçлă пулмасан, çынсем урăхла магилле ĕçсем тунă: чăвашсем çĕр вăрланă, уйрăм вырăнсенче шыв вăрланă. Каярахпа кĕрхи йăласем пуçланнă: авăн пăтти (авăн çинче кĕлĕ туни) е автан яшки, сăра чӳкĕ е кĕр сăри (сăрапа чӳклени) т. ыт. те. Авăн пăттине, сăмахран, авăна сыхлакан авăн кĕтӳçне чысланă май ирттернĕ.

Çĕрĕçпе çыхăннă йăласемсĕр пуçне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе çыхăннă магилле йăласем те чылай пулнă. Вĕсем ăнсăртран пуçланман. Тĕшмĕшлĕ çынсем ăнланнă тăрăх, çав йăласем этеме усă кӳнĕ. Çавăнпа çуркунне кĕтӳ пĕрремĕш хут тухнă чухне, ăнăçлă çӳретĕр тесе, кĕлтунă. Кĕркуннепе выльăх-чĕрлĕх тĕрĕстĕкел хĕл каçтăр, сурăхсем пăранланă вăхăтра путексем лайăх çитĕнччĕр тесе, магилле ĕçсем тунă. Вĕсен шутĕнче: ĕне ырри, сурăх ырри т. ыт те.

Чăваш çыннисен пурнăçĕнче кайăк-кĕшĕк ӳстересси, хурт-хăмăр пăхасси, пулă ĕрчетесси е ухутана çӳресси пысăк вырăн йышăннă. Çак ĕçсемпе те чылай тĕшмĕшсемпе йăласем çыхăннă.

Çулталăк хушшинче чăвашсем тĕрлĕ магилле ĕçсем тунă, укçа-тенкĕ тăкаклана, выльăх-чĕрлĕх пусса турра, тĕрлĕ хăватсене парнесем панă. Анчах темĕн тĕрлĕ кĕлĕсем е магилле ĕçсем туса ирттернĕ пулин те, вĕсен пурнăçĕнче ăнăçусем пулман, тĕшмĕшлĕ йăласене пула инкек-синкек çеç тӳснĕ. Чылай чухне чухăн хресчен çука тăрса юлнă, выçă ларнă.

Аслă Октябрь хыççăнхи çулсенче чăваш халăхĕн пурнăçĕ тĕпрен улшăнчĕ. Çавна май хуçалăхри ĕçсемпе çыхăннă тĕшмĕшлĕ йăласем те яланлăхах манăça тухса пыраççĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем, хăйсен тĕнле-магилле пĕлтерĕшне çухатса, халăхăн уявĕсем пулса юлчĕç. Сăмахран, паянхи пурнăçра акатуй хăйĕн авалхи пĕлтерĕшне пачах çухатрĕ, çĕр ĕçленĕсем çуракине ăнăçлă вĕçленине палăртакан савăнăçлă уяв пулса тăчĕ.

Куславкка районĕнчи Аманикри хисеплĕ колхозниксем акатуйра.

1930 çулсенче Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çак уява колхозлă хресченсен уявĕ туса хурасси çинчен постановлени йышăннă. Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăнхи çулсенче колхозсенче, районсемпе хуласенче тата республикăра акатуй вырăнне юрă праçникĕ ирттерме тытăнчĕç.

Çапла ĕнтĕ, авалхи тĕшмĕш йăлисем яланлăхах çухалчĕç е тĕпрен улшăнчĕç. Халĕ ĕнтĕ çумăр чӳкленине, сурхури е çăварни тенĕ тĕшмĕшле йăласене паллă тунине тĕн сĕрĕмĕнчен хăтăлса çитеймен хресченсем хушшинче çеç хутран-ситрен тĕл пулатăн.

Атеизмлă пропагандăра çакна манмалла мар: чи малтанах чăвашсем хушшинчи ĕçри магилле тĕшмĕшсен ултавлăхĕпе сиенлĕхне тăрă шыв çине кăлармалла, ăна пурнăçри ĕнтерӳллĕ тĕслĕхсемпе çирĕплетсе памалла.

Чăвашсем хушшинче мĕн авалтанпах тухатмăшлани е пăсни ытларах сарăлнă. Ку тĕшмĕшлĕхпе ĕлĕк-авал нумайăшĕ çыхланнă, чăвашсем хушшинче тухатмăш пăснă тенине час-часах илтме пулнă. Усал

вăй-хăватпа тачă çыхăннă май тухатмăшсем этеме сиен кӳреççĕ, выльăх-чĕрлĕхе пăсаççĕ тесе шухăшланă ăйван çынсем.

Социализм тунă тапхăрта тухатмăшсене ĕненесси майĕпен пĕтсе пычĕ. Анчах çавнашкал тĕшмĕшсенчен хăшĕ-пĕрисем хăвăртах çухалмарĕç. Аяларах эпир ун çинче ытларах чарăнса тăрăпăр.

Тахçанах — ĕлĕк-авал — чăвашсем хура тĕсе сивленĕ, усал хăватсен палли тесе шутланă. Авалхи чăвашсем тĕттĕмлĕхпе хура тĕсе пурнăçри тĕрлĕ инкексемпе ахальтен çыхăнтарман ĕнтĕ. Тĕттĕм каç, хура вăрман, тĕттĕм вырăнсем — çаксем пурте тискер вырăнсем, тискер кайăксемпе е тăшмансемпе тĕл пулассипе хăратса тăнăскерсем. Çавăнтанпа вара хура тĕс хаярлăхпа тискерлĕхĕн палли пулса тăнă. Акă мĕнрен ĕнтĕ хура кушака е çăхана курсан, хура куçлă çынсемпе тĕл пулсан, инкек пулать тесе тĕшмĕшленесси пуçланса кайнă.

Хура тĕспе çыхăннă тĕшмĕшле йăласем час-часах çынсен кăмăлне пăсаççĕ. Акă, хура кушак çул урлă чупса каçсан, чылайăшĕ каялла таврăнать е ыттисем малтан каçса каясса кĕтсе тăрать. Тепĕр чухне çав çултан пăрăнса иртни те пулать. Ку тĕшмĕшлĕх çамрăксем хушшинче те пур-ха.

Пĕр-пĕр шкул ачи, сăмахран, хура кушака тĕл пулнă кун «иккĕ» паллă илнĕ тейĕпĕр. Анчах вăл урока лайăх хатĕрленсе пыманшăн хура кушак ăçтан «айăплă» пултăр-ха ĕнтĕ. Хура кушака курсан, шкул ачи ырă мар пуласса кĕтсе, хăйне хăй пуçне минретет. Вара, наллах, учитель ыйтăвĕ çине тĕрĕс ответ параймасть, начар паллă илет. Общественноçăн ачасене çавнашкал тĕшмĕшсен сиенлĕхĕ çинчен çине тăрса ăнлантарса памалла.

Акă тата тепĕр тĕслĕх илĕпĕр. Кам та пулин йывăр чирлесен, тĕшмĕшлĕ çынсем пăснă теççĕ. Сасартăк çемьере çын йывăр чирлесе ӳксен е вилсен тата выльăх чирлесен, тĕшмĕшлĕ ватă çынсем кил таврашĕнче пăсма пăрахнă тĕрлĕ япаласене шырама тытăнаççĕ. Хресчен кил картишĕнче, паллах, унашкал япаласем çăмăллăнах тупăнаççĕ: тахăшин чăххи çăмартине йăвара мар, аякра туса пăрахнă, такамăн кĕсйинчен укçа тухса ӳкнĕ, пĕр-пĕр пусма татăкĕ çилпе вĕçсе кĕнĕ е килти йытă урамран шăмă йăтса пынă... Çак

япаласене вара пурне те пăсма пырса пăрахнă тесе тĕшмĕшленнĕ.

Пĕррехинче Çĕрпӳ районĕнчи Вăрăмçуртра пурăнакан пĕр гражданкăн ĕни сасартăк чирлесе ӳкнĕ. Кӳршĕсемпе калаçнă хыççăн хутла сахал вĕреннĕ çын çакна кам та пулин пăснă тесе шутланă. Çитменнине вăл çав кун картишĕнче çăмарта тупнă. Хăраса ӳкнĕ хĕрарăм ăна васкасах çырмана кайса ывăтнă, хăй вара юмăç патне васканă. Анчах унăн ĕни çав-çавах вилсе выртнă. Çав вăхăтрах юмăçăн хăйĕн те сурăхĕсем вилнĕ. Çак фактсене вырăнта тĕрĕслени акă мĕн кăтартса панă: кунта нимĕнле пăсни те пулма пултарайман, вĕсен выльăхĕсем пăсăк апат çисе вилнĕ.

Тĕшмĕшлĕхе е тĕттĕмлĕхе пула хресчен хуçалăхĕсем çакăн пек инкек-синкек тӳсни çинчен каласа паракан тĕслĕхсене тата нумай илсе кăтартма пулать.

Коммунизмлă воспитани илнĕ, наукăллă пĕлӳсемпе хĕçпăшалланнă совет çамрăкĕсем турра та, нимĕнле хăватсене те ĕненмеççĕ. Анчах тĕн тĕшмĕшĕсен юлашкисем вĕсен ăстăнĕнче тĕпĕ-йĕрĕпех тасалса пĕтеймен-ха. Вĕсем хушшинче тухатмăшланса пăсасран шикленесси халĕ те тĕл пулкалать. Ку вăл ялсенче тухатмăш карчăксем пурринчен те нумай килет. Çавнашкал карчăксем тĕшмĕшлĕх çинчен тĕрлĕ юмах-сăмах çӳретеççĕ, укçа е ытти «пăсмалли» япаласем пырса пăрахаççĕ. Паллах, вĕсем тĕн ултавĕнчен хăтăлсах çитейменнисене, уйрăмах ачасене шиклентереççĕ.

Тĕшмĕшлĕ çынсем хушшинче куç ӳксе пăсăласран хăрани те анлă сарăлнă. Чăваш ялĕсенче чылай çĕрте хăшпĕр çынсем куç ӳкерме пултарасса ĕненесси çаплах пĕтмен-ха. Ватă карчăксем, уйрăмах хура тĕслĕ е вичкĕн куçлă арçынсемпе хĕрарăмсем куç ӳкерме пултараççĕ тесе ăнланаççĕ вĕсем. Хăшпĕр чăваш çыннисем, куç ӳкесрен хăраса, сывă ачисем çине пăхма чараççĕ, инкек-синкек е сиен пулса ан тухтăр тесе, пурнăçри, уйри, сад пахчинчи ăнăçусем пирки мухтанма, сăмах тапратма тата савăнма хăраççĕ.

Кунашкал тĕшмĕшленес йăлана пĕтерме çăмăлах мар. Çавăнпа тухатмăшла тĕшмĕшсем çухалнă, вĕсемпе текех кĕрешмелли çук текенсемпе килĕшсе тăмалла мар.

Тухатмăшланнине е пăснине хирĕç халăхра ĕлĕк-

авал çынна хӳтĕлекен амулетсемпе[1] йăласем те тухса кайнă. Вĕсем çынна куç ӳкесрен, чирлесрен, килти выльăх сывмарланасран е ытти сиенлĕхсемпе пăснисенчен сыхлаççĕ пулать. Çакнашкал мăшилле япаласен, тепĕр майлă каласан, талисмансемпе амулетсен шутне чăвашсем рак хуранĕсене, шăрçасене, кивĕ укçасене, уйрăм йывăççемпе ӳсентăрансене, пăлан мăйракисене, лашасен пуç шăммисене, такансене, тĕрлĕ тĕслĕ кĕпесене тата ытти япаласене кĕртнĕ.

Хӳтĕлекен йăласемпе амулетсем ăçтан пуçланса кайнă-ха? Авалхи чăвашсем тĕрлĕ хăватсем çутçанталăкра çеç мар, уйрăм япаласенче те пулаççĕ тесе ăнланнă. Çавнашкал япаласенчен вĕсем хăйсене пурнăçра пулăшма, инкек-синкек пуласран сыхлама, усал тĕселе сирсе яма ыйтнă.

Ку йышши тĕшмĕшсем историре нумай вăхăта тăсăлнă, паянхи куна çитиех упранса юлнă. Чылай ялсенче амулетсем халĕ те пур. Лаша пуç шăмми е такан, тĕслĕхрен, куç ӳкесрен тата пăсасран хӳтĕлеме пултаракан япаласенчен чи лайăххисем шутланаççĕ имĕш. Çавăнпа лаша пуç шăммине утарсенче, садсенче, хапхаран пырса кĕнĕ çĕре çакса янă, таканне пӳртум алăкĕ умне çапса лартнă. Пăсма пултаракансем япала çине пăхиччен çав амулетсене курни куç ӳкесрен е пăсăласран сыхласа хăварать тесе шутланă тĕшмĕшлĕ çынсем.

Тĕшмĕшлĕ чăвашсем усал-тĕсел пăсасран сыхланас тĕллевпе пилеш йывăççи татăкне, кивĕ укçана е ытти хăшпĕр япаласене мăйран çакса е кĕсъере чиксе çӳренĕ. Кил-çурта аслати çапасран пилеш йывăççин туратне çурт никĕсĕн айне те хурса хăварнă.

Ӳсекен симĕс сухана, хăярсене, помидорсене иртенçӳренсем куç ӳкересрен сыхлакан амулет вырăнне йăран çине çăмарта хуписем çакса янă. Хĕрсем куç ӳкесрен илемлетнĕ мăй çыххи çакса çӳренĕ.

Çакнашкал тĕшмĕшлĕхсене пĕтерес тесен, вĕсем мĕнле пуçланса кайнине наука вĕрентнĕ пек ăнлантарса памалла. Тĕшмĕшлĕ çынна, сăмахран, чăвашсем лаша пуç шăмми е такан этеме хӳтĕлеме пулта-

---

[1] А м у л е т — тĕшмĕшлĕ çынсем чиртен е инкекрен сыхлать тесе ĕненсе çакса çӳрекен япала. *Ред.*

рассине ĕненни мĕнле пуçланса кайнин историне каласа пани питĕ интереслĕ.

Чăвашсен авалхи тĕрĕк йăхĕсем лашана усал хăватсене хăваласа, сирсе яма пултаракан выльăх тесе шутланă. Апла пулсан, унăн шăмми-шакки—уйрăмах пуç шăмми — вĕсем ăнланнă тăрăх, ырă хăватлă пулмалла. Такан та лашан пĕр пайĕ шутланнă. Вăл, тимĕртен тунăскер, чул çине пуссан, хĕм сирпĕнет, вара усал хăватсем хăраса тараççĕ имĕш. Çапла пуçланса кайнă ĕнтĕ кунашкал тĕшмĕшлĕхсем.

Чăвашсен тĕшмĕшлĕхĕнче тата хӳтĕленмелли йăласем палăрса тăнă: хĕр аки, çĕр витĕр тухни, тимĕр карта т. ыт. те. Сăмахран, çĕр витĕр тухни уйрăмах анлă сарăлнă пулнă. Ку магилле йăлана ялăн хĕвелтухăç енчи пĕр-пĕр çырмара çулталăкра икĕ-виçĕ хутчен ирттернĕ. Усал, ерекен чирсем сарăлсан, пĕтĕм ялйышпа тата выльăх-чĕрлĕхпе çĕр хапхи витĕр тухнă. Усал хăватсенчен, чирсенчен, пăсасран тата ытти инкек-синкекрен хăтăлма пулăшать тесе, çак йăлана ĕлĕк-авал пысăк хак панă.

Октябрь хыççăнхи çулсенче, социаллă-экономикăллă пысăк улшăнусем пулса иртнĕ май, ку тĕшмĕшсем те пĕтсе пычĕç. 1918—1921 çулсенче хĕр акине юлашки хут ирттернисене халĕ ваттисем çеç астăваççĕ. Анчах вутпа е тĕтĕмпе усал хăватсенчен, тĕрлĕ чир-чĕртен тасалма пулать тесе тĕшмĕшленни чылай вăхăта пычĕ. Тĕшмĕшлĕ çынсем авалхи йăлапа кил-çурта, выльăха, утара тĕтĕмпе тĕтĕреççĕ. Пĕчĕк ача макăрать пулсан, куç ӳкнĕ тенĕ, амăшĕ е юмăç вара ăна типĕтнĕ кăмпа — ăвă çунтарса тĕтĕрнĕ. Шĕшкĕ кăмпипе — вĕчĕм ăвĕпе тĕтĕрни вăйлă пулăшать тесе шутланă.

Хăшĕ-пĕрисем ку тĕшмĕшлĕхе халĕ те ĕненеççĕ, теприсем вара ăна ытахальтен çеç, «тен, пулăшĕ» тесе кăна хăтланса пăхаççĕ. Тĕтĕрнĕ хыççăн чирлĕ ача сывалать пулсан, ку вăл «магилле сипленинчен» килменнине, тĕтĕрни сиенлĕ пулнине унăн ашшĕ-амăшне ĕнентерме çăмăлах мар.

Тĕшмĕше ĕненекенсем каласа панă тăрăх, усал хăват пăснинчен çын хăй тĕллĕн нихçан та тасалма пултараймасть; вăйлă пăснинчен сыватма, тасатма, вĕрме-сурма ăста юмăçсем çеç пултараççĕ имĕш.

Кирек мĕнле кивĕ йăла та, паллах, çынна пысăк сиен кӳрет. Пăснине ĕненни, унран хӳтĕленмелли

тĕшмĕшлĕ йăласем çынсен ăстăнне минретеççĕ, çапла вара, пĕтĕмĕшпе илсен обществăна сиен кӳреççĕ.

Тухатмăшсене ĕненес тĕшмĕш çитĕннисене çеç мар, ача-пăча ăстăнне те пăтратать. Çитĕннисем тухатмăшсем, усал хăватсемпе амулетсем çинчен калаçнине итлесе е тухатмăшсемпе юмăçсем вĕрни-сурнине курса, ачасем хăракан пулса юлаççĕ. Тепĕр чухне хăшпĕр ашшĕ-амăшĕсем ачисене хăйсене те тĕшмĕшлĕ ĕçсем тума хистеççĕ.

Ĕлĕк-авал чăвашсем пур чирсене те усал хăватсем пăснăран килет тесе шутланă. Çавна май вара халăхра сыватмалли магилле ĕçсем — сывату магийĕ пуçланса кайнă. Тĕнчери нумай халăхсенни пекех, çак маги чăвашсем хушшинче те чылай енлĕ пулнă. Пĕр йышши чирсенчен çынсем вĕрсе-сурса сывалма тăрăшнă, теприсенчен сывалма тĕрлĕ хăватсене пĕччен е халăхпа парнесем кайса панă. Сывату магийĕн ĕçĕсене юмăçсем, вĕрӳçĕсем, вар пусакансем, алă-ура лартакансем туса ирттернĕ.

Революциччен чăваш çĕршывĕнче медицина учрежденийĕсем пулманпа пĕрех. Çавăнпа та çынсене наукăллă меслетсемпе сыватасси пирки сăмах та пулма пултарайман. Акă мĕншĕн ĕнтĕ вĕсен ирĕксĕрех юмăçсем патне çӳреме тивнĕ.

Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче те чăвашсем хушшинче юмăçсем сахал мар пулнă. Халĕ ĕнтĕ юмăçсене ĕненмеççĕ, вĕсем «сиплени» сиен кăна кӳнине лайăх ăнланаççĕ. Анчах вĕсене ĕненесси тĕппипех пĕтнĕ тесе калама çук-ха. Ялсенче юмăça çӳрекенсем, вĕсенчен юмăç яма, «сиплеме», çемьери хирĕçӳсене иĕтерме, пуç çавăрттарма ыйтакансем пуррине чылай фактсемпе çирĕплетсе пама пулать.

Мĕнле çынсем-ха вĕсем чир-чĕртен «сыватакан» юмăçсем? Вĕсем иртнĕ ĕмĕрти юмăçсен йăхĕнчен тухман-ши? Эпир В. Магницкин «Чăвашсен кивĕ ĕненĕвне ăнлантаракан материалсем» кĕнекинче çырса кăтартнă XIX ĕмĕрхи чăваш юмăçĕсен йăхĕсемпе паллашрăмăр. Анчах вăл юмăçсем йăхран йăха тăсăлса пынине çирĕплетсе паракан пĕр факт та тупаймарăмăр.

Юмăçсен ĕçне сăнаса пăхни вĕсем тĕшмĕшлĕ çынсем пулни, пилĕк авмасăрах сĕмсĕррĕн укçа-тенкĕ тӳпма тĕллев лартни курăнать.

М. юмăç (Çĕрпӳ районĕ) çак кĕнеке авторне пĕр

вăтанмасăрах çапла каласа панă: «Манăн, ватă çынăн, урăхла майпа укçа-тенкĕ ăçтан тупас? Çынсем ман пата хăйсем килеççĕ, эпĕ вĕсене чĕнсе çӳремен. «Ĕçшĕн» вара кашни мĕн чухлĕ май пур, çавăн чухлĕ тӳлет. Нихçан та ирĕксĕрлеместĕп». Анчах вăл выçлăх хĕрарăм пулни, юмăça çӳрекенсене уççăнах ултала курăнса тăрать.

Юмăçсем тупăшсемшĕн пĕр-пĕринпе ăмăртасси те сахал мар пулнă. Акă, сăмахран, 1927 çулта республикăра тухса тăнă «Канаш» хаçатра Именкассипе Малти Пукаш ялĕсенчи юмăçсем çинчен çырса кăтартнă. Вĕсенчен кашни хăйĕн пултарулăхĕпе мухтаннă, пĕр-пĕрне хурланă. 1927 çулхи июнĕн 11-мĕшĕнче вĕсем çапăçса кайнă та Именкассинчи юмăç тепĕр юмăça вĕлернĕ.

Уйрăм вырăнсенче юмăçсем пулманни унта юмăçсене ĕненес йăласем пĕтнине пĕлтермест. Ялти халăхăн пурнăçĕпе килти йăлисене тĕплĕ пĕлни кăна çак тĕшмĕшсем пуррине тата вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса парать. Вырăнта пурăнакан хăшпĕр юлташсем вĕсен таврашĕнче юмăçсене ĕненес йăла пĕтнĕ тесе çирĕплетнипе килĕшме çук. Унашкал каласăни совет общественноçĕн тимлĕхне кăна пусарать, лăпкăлăх тытăнне илсе пырать, тĕне хирĕç кĕрешес ĕçе хавшатать.

Чăвашсем хушшинче вăйлă сарăлнă тата вăраха пыракан тĕшмĕшлĕх вăл—юмăç пăхнине ĕненни.

Тахçан авал чăвашсем çутçанталăкпа обществăри явленисен, пурнăçри йăласен чăн-чăн сăлтавĕсене ăнланман, пулас вăхăтра хăйсене мĕн кĕтнине чухласа илме пултарайман. Çавăн чухне ĕнтĕ халăх хушшинче çынсен уйрăм ушкăнĕсем уйрăлса кайнă. Вĕсем, тĕрлĕ хăватсемпе тачă çыхăну тытса, малашне мĕн пулассине пĕлтерме пултарнă имĕш. Çав оракулсене чăвашсем юмăçсем тесе ят панă. Тĕшмĕшлĕ çынсем çеç юмăçсем малашне мĕн пуласса каласа пама, инкексинкексен сăлтавĕсене тата мĕн пĕлменнине пĕлтерме пултараççĕ тесе шутлаççĕ.

Юмăç пăхтарас тĕшмĕшлĕх шутне тĕлĕк курнă пирки тĕрĕс мар ăнланни те кĕрет. Çавăнпа ĕнтĕ чăвашра тĕлĕкçĕ-юмăçсем тухса кайнă. Хăшпĕр стариксемпе карчăксем, тепĕр чухне çамрăк хĕрарăмсем те, тĕлĕк мĕне пĕлтернине ăнлантарса пама хăтланаççĕ.

Авалхи чăвашсем тĕрлĕ чир-чĕр усал хăватсенчен килет тесе шутланă. Çакнашкал хăватсенчен пĕри киремет чир-чĕр ертнĕ, выльăха ӳкерсе вĕлернĕ, инкексинкек тунă пулать; йĕрĕх куç, ӳт-тир, нерв чирĕсем ертет, вĕри çĕлен çынна психика енчен пăсать, ийе тата хытăм тытсан, çынна паралич çапать тесе ăнланнă.

Тĕшмĕшлĕ çынсен шучĕпе çынна чир-чĕр усал хăватсене кӳрентернипе, вĕсене вăхăтра парне паманнипе, язычество йăлисене пăхăнманнипе çыпçăнать имĕш.

Совет çыннисен пурлăхпа культура шайĕ ӳсни, уйрăмах медицина науки аталанни усал чир-чĕре —чумана, холерăна, тифа, столбняка, сивĕ тытнине тата ытти йывăр чирсем сарăлассине йăлтах пĕтерсе лартма май пачĕ.

Юмăçа çӳрени сиен çеç кӳрет пулсан, совет медицини йывăр чирсемпе чирленĕ пиншер çынна сыватнă, коммунизм обществи тăвакансен ретне тăма пулăшнă.

Малта пыракан совет наукине пропагандăлани тухатмăшсемпе юмăçсене ĕненес тĕшмĕшлĕхе хирĕç кĕрешес ĕçре пысăк вырăн йышăнать. Анчах пирĕн обществăра çынсен тĕшмĕшлĕхĕпе усă курса ĕçлемесĕр пурăнма сĕмленекенсем паян кун та пур-ха. Вĕсен шутне, тĕслĕхрен, юмăçсем кĕреççĕ. Çавнашкал çынсем обществăна усăллă ĕçе хутшăнмаççĕ, ниçта та ĕçлемеççĕ. Çавăнпа та вĕсем хушшинче ăнлантару ĕçне туса ирттернипе пĕрлех администрацийлĕ мерăсем йышăнни те кирлĕ. Çав харам пырсемпе кĕрешес ĕçре ĕççыннисен пухăвĕсем, юлташла судсем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

АТЕИЗМЛĂ ВОСПИТАНИЕ ЙЁРКЁЛЕССИ ÇИНЧЕН

Чăвашсен язычество тĕн юлашкийĕсем вĕсем — ĕмĕртен юлнă ĕненӳсемпе йăласем. Христианство тĕнĕпе ислам тĕнĕ чăвашсем хушшинче сарăлнă вăхăтра язычество чылай улшăннă, вăл, нумай ĕмĕрсем витĕр тухса, пирĕн вăхăта та çитнĕ. Кивĕ тĕнчерен юлнă тĕн тĕшмĕшĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтермелли меслетсене шырас пулсан, чи малтанах вĕсем çавнашкал чылай вăхăт хушши сыхланса юлнин тĕп сăлтавĕсене тимлĕн тĕпчесе пĕлмелле.

Тĕшмĕше мĕншĕн ĕненеççĕ?

Тĕн тĕшмĕшĕсем мĕнле сăлтавсене пула ку таранчченех сыхланса юлнине наука çителĕклех тĕпчесе пĕлнĕ ĕнтĕ. Çав сăлтавсем объективлă е субъективлă пулаççĕ. Объективлă сăлтавсем чи малтанах социализмлă обществăн хăшпĕр енĕсем çителĕклĕ аталанманнинчен, общество пурнăçĕнче кивĕ тĕнче юлашкисем çаплах тĕл пулнинчен килеççĕ. Сăмахран, ялсенче, хуларипе танлаштарсан, турра ĕненекенсен хисепĕ икĕ хут ытларах шутланать. Çакна шута илмесен, паллах, унта тĕшмĕшлĕх вăраха пынине ăнланма çук. Акă тата турра ĕненекенсем хушшинче сахал вĕреннĕ çынсем 70 процентран иртнине, вăтам пĕлӳ илнисем хушшинче 9 процента çеç çитнине мĕнпе ăнлантарса памалла-ха? Турра ĕненекенсен шучĕ пенсионерсемпе кил хуçи хĕрарăмĕсем хушшинче ытларах пулни те ахальтен килмест ĕнтĕ.

Çӳлте асăннă объективлă факторсемпе ытти социаллă факторсене тĕрĕс ăнланса илсе, атеизмлă ĕçре тивĕçлĕ выводсем тумалла. Тĕп задача вăл — тĕне пĕтерме пулăшакан социаллă факторсене малалла вăйлăрах аталанма майсем туса парасси. Вĕсен шутĕнче — хулапа ял хушшинчи, çавăн пекех ăстăн ĕçĕпе вăй-хал ĕçĕ хушшинчи уйрăмлăхсене пĕтересси, пурне те вă-

там пĕлӳ парасси т. ыт. те. Халăха атеизмлă воспитани парас ĕçе лайăхлатас тесен, коллективизмпа юлташлăха куллен аталантармалла, пур ĕççыннисем çине те тимлĕ пăхмалла, пенсионерсемпе кил хуçи хĕрарăмĕсене обществăллă пурнăçа тачă хутшăнтармалла, предприятисем вырнаçнă районсенче вырăна тухса ĕçлемелле т. ыт. те.

Тĕн тĕшмĕшĕсем халĕ те пĕтменнине гносеологилле уйрăм факторсемпе те ăнлантарса пама пулать. Çав факторсен шутне çынсен ăстăнĕ пурнăç хăвăрт малалла аталанса пынинчен юлса пыни, вĕсем çутçанталăкри явленисене тепĕр чухне тĕрĕс ăнланмасăр идеализмлă йăнăшсем тума пултарни т. ыт. те кĕреççĕ. Астăн пулăмлăхран [1] юлчи чăвашсен авалхи тĕн ĕненĕвĕсен юлашкисене тишкĕрсен лайăх курăнать. Çав ĕненӳсене çуратнă социаллă-экономикăллă строй тахçанах çухалнă пулин те, унăн юлашкисем чылайччен сыхланса юлнă. Вĕсем ăруран ăрăва, ĕмĕртен ĕмĕре куçса пынă. Çак авалхи мĕнпур ăрусен йăлисем, кивĕ йĕркисем çынсен ăстăнĕпе пурнăçĕнче пысăк чăрмав пулса тăнă, тесе çырнă К. Маркс. Авалхи ĕненӳсен юлашкисем яланах кивĕ обществăри тата пурнăçри йăласемпе е йĕркесемпе сыпăнса пынă.

Çапла ĕнтĕ, тĕшмĕшлĕх проблемисене пăхса тухнă май çутçанталăкри явленисене ăнланас ĕçре идеализмлă йăнăшсем тума пултарни çине тимлĕ пăхмалла. Çак факторсем халăх хушшинче пур-и-ха? Паллах, пур. Халлĕхе çынсем пурте пĕтĕмĕшле пĕлӳсем илеймен-ха. Çавна пула вĕсем йĕри-тавра пулса иртекен явленисене пурне те тĕрĕс ăнланса илеймеççĕ. Мĕн вăл ыйхă, тĕлĕк, тĕрлĕ чир-чĕр? Мĕн вăл галлюцинаци, телепати, тĕнче уçлăхĕ, галактика, метагалактика? Пĕлӳ çителĕклĕ илеймен çынсене ку явленисене наука вĕрентнĕ пек ăнланса илме питех те йывăр. Çавăнпа та вĕсем хушшинче тĕшмĕшлĕхпе кивĕ йăла-йĕркесем нумайччен сыхланаççĕ.

Гносеологилле уйрăм фактсене пăхса тухни пире атеизмлă ĕçре тивĕçлĕ выводсем тума май парать. Тĕп вывод вара çакă пулса тăрать: çынсен пурнăçне тата вĕсен кулленхи йăлисене коммунизмла тĕппипех çĕнетмесĕр, халăха çутçанталăкпа общество аталанă-

---

[1] П у л ă м л ă х — бытие. *Ред.*

вĕн законĕсене тĕплĕн ăнлантарса памасăр тата пурне те çителĕклĕ пĕлӳ памасăр, тĕн тĕшмĕшĕсене яланлăхах пĕтерме çук. Ку тĕллеве пурнăçлас тесен, пурне те вăтам пĕлӳ памалла, хальхи вăхăтра хутла сахал вĕреннĕ граждансене пурне те çутçанталăкпа общество çинчен вĕрентекен шкулсене е кружоксене явăçтармалла.

Çӳлерех эпир объективлă факторсен пĕлтерĕшĕсене пăхса тухрăмăр. Субъективлă факторсем пирки те сăмах хускатмасăр иртме çук. Идеологи фронтĕнче ĕçлекенсем, пĕтĕм совет общественноçĕ тĕн тĕшмĕшлĕхĕпе çине тăрса кĕрешмесен, кивĕ пурнăç юлашкисем хăйсем тĕллĕнех пĕтсе ларас çук.

Тĕрлĕ тĕн тĕшмĕшĕсем паянхи кунченех сыхланса юлнин сăлтавĕсенчен пĕри вăл — массăсем хушшинче наукăллă-атеизмлă пропагандăпа массăллă-политикăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыни пулса тăрать. Интеллигентсем сахал е пачах çук ялсенче, колхоз центрĕнчен аякра вырнаçнă бригадăсенче ку ĕç уйрăмах начар пырать Колхозсен тĕп усадьбисенче тĕне хирĕçле ĕçе кăштах йĕркеленĕ пулсан, ытти бригадăсенче вара ку тĕлĕшпе нимех те туманнине палăртмалла. Юмăçсемпе тĕшмĕш карчăксем çавнашкал ялсенче çынсене улталаса пурăнаççĕ, çавăн пек ялсене иртен-çӳрен «проповедниксемпе» манахсем пырса çӳреççĕ, хутла сахал вĕреннĕ çынсен ăстăнне минретеççĕ.

Язычество юлашкисене ĕненесси паянхи кунченех сыхланса юлни, шăпах ĕнтĕ наукăллă-атеизмлă ĕçре çакнашкал фактсем çине тимлĕ пăхманнинчен килеççĕ. Язычество тĕппипех пĕтнĕ тесе йăнăш ăнланнине пула вырăнти организацисен хăшпĕр руководителĕсем чăвашсен авалхи тĕшмĕшлĕхĕпе кĕрешме пăрахнă. Язычество тĕн тĕшмĕшлĕхĕ ку таранченех сыхланса юлни çакăнтан килмест-и-ха ĕнтĕ?

Уйрăм районсенче наукăллă-атеизмлă пропагандăна кирлĕ пек йĕркелеменни вырăнти обществăллă организацисен руководителĕсем ку ĕçе чăтма çук япăх ертсе пынинчен те килет. Партипе комсомолăн колхозсенчи организацийĕсенчен хăшĕ-пĕрисем тĕне хирĕç туса пыракан кĕрешĕве коммунистсемпе комсомолецсене пурне те явăçтарман, уйрăм организацисенче

атеизмлă ĕçе ертсе пыракан организаторсене çирĕплетмен. Хăшпĕр хуласемпе районсенче атеизмлă воспитание кирлĕ те кăткăс ĕç вырăнне хумаççĕ. Чылай учрежденисемпе организацисен руководителĕсем хăйсен коллективĕсенче тĕне хирĕçле ĕçе такам туса пырасса шанаççĕ. Республикăри чылай министерствăсен — уйрăмах сывлăха сыхлас ĕç министерствин — учрежденийĕсенче, хăшпĕр промышленноçпа строительство предприятийĕсенче, колхозсемпе совхозсенче ĕççыннисене атеизмлă воспитани парас ĕçе япăхтарса янă. Тĕне фанатикла ĕненекенсем, çакăнпа усă курса, ĕççыннисем хушшинче закона пăссах тĕне уççăн пропагандăлаççĕ, çынсен ăстăнне тĕрлĕрен тĕшмĕшлĕхпе минретеççĕ.

Юмăçсемпе вĕрӳçĕсем хăшпĕр хуласемпе ялсенче çынсене сĕмсĕррĕн те уççăнах улталаса пурăнаççĕ, анчах вырăнти влаçсем вĕсене хирĕç тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Наукăллă атеизма пропагандăлас ĕçри çакнашкал çитменлĕхсем, пирĕн шутпа, республикăра ку ĕçе йĕркелесе тăракан координациллĕ тĕп центр çуккинчен килет. РСФСР «Пĕлӳ» обществин Чăваш республикинчи организацийĕ, паллах ĕнтĕ, атеизм ĕçĕн организаторла функцийĕсене пĕтĕмпех хăй çине илеймест. Çавăнпа наукăллă атеизма пропагандăлас тĕлĕшпе республикăри хуласемпе ялсенче парти комитечĕсен пропагандăпа агитаци пайĕсем тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. Шел пулин те, халлĕхе вĕсен ĕçĕнче çитменлĕхсем чылай-ха. Партин отчетпа суйлав пухăвĕсенче тата конференцийĕсенче коммунистсем вĕсене час-часах кăтартса параççĕ.

Çапла ĕнтĕ, тĕн тĕшмĕшлĕхĕсем паянхи кунченех сыхланса юлни объективлă сăлтавсемпе субъективлă уйрăм сăлтавсенчен килнĕ. Кивĕ тĕнчен çавнашкал йăлисене тĕп тăвас тесен, тĕшмĕшлĕхе сыхланма пулăшакан çав сăлтавсене пĕтермелле, наукăллă атеизма тата анлăрах пропагандăламалла. Тĕрлĕ тĕшмĕшлĕхсем мĕнле сăлтавсене пула сыхланса юлнине тĕплĕн пĕлни атеистсене тĕн юлашкисене тĕп тăвас ĕçе анлă та вирлĕ туса пыма май паракан меслетсем шыраса тупма, наукăллă-атеизмлă пропагандăна халăх хушшинче анлăрах сарса яма пулăшаççĕ.

Ĕçре пур формăсемпе меслетсемпе тĕ усă курмалла

Наукăллă-атеизмлă пропаганда — Коммунистсен партийĕ массăсем хушшинче туса пыракан идеологиллĕ ĕçĕн чи пысăк пĕлтерĕшлĕ участокĕ. Вăл марксистла-материалистла мировоззрение реакциллĕ, наукăна хирĕç пыракан мировоззрени хушшинчи çивĕч кĕрешӳ пулса тăрать.

«...Тĕн тĕшмĕшлĕхне хирĕç кĕрешессине,— тенĕ КПСС Центральнăй Комитечĕ «Халăх хушшинче наукăллă атеизма пропагандăлас ĕçри çитменлĕхсем çинчен» йышăннă постановление,—хальхи вăхăтра наукăллă, материализмлă мировоззрение наукăна хирĕçле тăракан мировоззрени хушшинчи идеологиллĕ кĕрешӳ вырăнне хумалла»[1].

Çутçанталăкри явленисемпе общество пурнăçне материализмла ăнлантарасси наукăллă-атеизмлă пропагандăра тĕп ĕç пулса тăрать. Идеализм тата тĕн мировоззренийĕ тĕнчепе этеме турă тунă тесе çирĕплетет. Материализм вара пачах урăхла вĕрентет: тĕнчене нихçан та, никам та туман, вăл пулнă та, ĕмĕр-ĕмĕрех пулать те, çутçанталăкри эпир асăрхакан тĕрлĕ явленисем турăран килмеççĕ. Марксистла-ленинла материализмăн çак вĕрентĕвĕ наукăллă-атеизмлă пропагандăн тĕп никĕсĕ пулса тăрать. Çак никĕс çинче кăна çут тĕнче, Хĕвел, Çĕр чăмăрĕ пуçланса кайнине тата вĕсен тытăм йĕркине, пурнăç, ӳсентăран, выльăх-чĕрлĕх, этем мĕнле пулса кайнине, аталанса пынине ăнлантарса пама пулать. Çак никĕс çинче кăна çутçанталăкпа общество аталанăвĕн закономерноçĕсене палăртма пулать.

Массăсене наукăллă-атеизмлă воспитани парас ĕçри тĕп меслет вăл турра ĕненекенсемпе иккĕленекенсем хушшинче куллен чăтăмлă ĕçлени, вĕсене çутçанталăкпа общество аталанăвĕн законĕсене наука вĕрентнĕ пек çăмăл чĕлхепе ăнлантарса пани пулать. «Тĕн ĕненĕвĕсем ултавлă пулнине чăтăмлăн ăнлантармалла. Анчах çапла ăнлантарни кăна çителĕксĕр, наукăллă-атеизмлă пропагандăна çивĕччĕн туса пымалла. Тĕн — наукăпа килĕшмен идеологи, вăл хăй тĕллĕнех, тăрăшмасăрах, унпа вăйлăн кĕрешмесĕрех пĕтсе ларать тесе лăпланса ларни пулмалла мар. Тĕне

[1] «Правда» хаçат, 1954 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

хирĕç наукăллă атеизма çивĕччĕн пропагандăламалла»[1].

Атеизма пропагандăлас ĕçе наукăллă мировоззренин тĕп тăшманĕ пулса тăракан тĕнĕн реакциллĕ идеологийĕпе нимĕн килĕшсе тăмасăр туса пымалла, ку ĕçре уйрăм тĕн ушкăнĕсем обществăна хирĕçле тискер ĕçсем тунине тăрă шыв çине кăлармалла, тĕн ĕненĕвĕпе унăн тĕшмĕшлĕхĕ калама çук пысăк сиен кӳнине яр-уççăн кăтартса памалла.

Наукăллă-атеизмлă пропагандăри тĕп задача вăл — коммунизмлă обществăн пулас çыннине, тĕн сĕрĕмĕнчен йăлтах тата яланлăхах хăтăлса çитнĕ çынна пăхса çитĕнтересси. Ку тĕллевпе наукăллă-атеизмлă пропагандăра çивĕч те витĕмлĕ формăсемпе усă курмалла. Çав формăсем шутне пухусем, конференцисем, политикăллă кружоксем, лекцисем, ыйтусемпе ответсен каçĕсем, тематикăллă вечерсем, атеистсен шкулĕсемпе университечĕсем, вырсарникунхи вулавсем т. ыт. те кĕреççĕ.

Халăхăн уйрăм ушкăнĕсем хушшинче наукăллă-атеизмлă ĕçе туса пыма кирлĕ формăсемпе майсене тата меслетсене тĕрĕс суйласа илме пĕлесси — пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту. Атеизмлă ĕçе йĕркелекенсем часчасах тĕне хирĕçле мероприятисен планĕсене туса хатĕрленĕ чухне вырăнти условисене, аудиторин уйрăмлăхĕсене шута илмеççĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем атеизмлă ĕçри витĕмлĕ формăсемпе хăçан тата мĕнле условисенче усă курмаллине пĕлмеççĕ.

Чылай обществăллă организацисен ĕçне тишкĕрсе ыхни халăха атеизмлă воспитани парас ĕçри формăсемпе меслетсене çакăн пек тĕп ушкăнсем çине пайлама кирлине кăтартса парать: атеизма тата çутçанталăка наука вĕрентнĕ пек пропагандăласси; массăллă-атеизмлă ĕçсем туса ирттересси; турра ĕненекенсемпе уйрăммăн ĕçлесси.

Атеизма тата çутçанталăка наука вĕрентнĕ пек пропагандăлас ĕçе тĕрлĕ формăсемпе туса пыни атеизмлă воспитанире тĕп вырăн йышăнать. Вĕсен шутне лекцисемпе докладсем, калаçусемпе политинформацисем, наукăллă атеизма пичет урлă пропаган-

[1] КПСС Центральнăй Комитечĕн июньти Пленумĕнче тунă доклад. «Правда» хаçат, 1963 çулхи июнĕн 19-мĕшĕ.

дăлани, радио, кино, курăнакан агитаци, теорилле семинарсем, наукăллă атеизм никĕсĕсене вĕренмелли шкулсем, партипе комсомолăн политика вĕренĕвĕн системинчи «Атеизм тата çамрăксем» ятлă кружоксем т. ыт. те кĕреççĕ.

Атеизма халăх хушшинче пропагандăлас ĕçри чи витĕмлĕ те организациллĕ формăсем вĕсем наукăллă атеизм теорийĕпе историне вĕренмелли кружоксем, шкулсем, теорилле семинарсем пулса тăраççĕ. Республикăра наукăллă атеизма вĕрентес тĕлĕшпе пурĕ 55 кружокпа теорилле семинар ĕçлет. Вĕсенчен чылайăшĕ вĕренӳ çулне ăнăçлă вĕçленĕ. Çакăн пек теорилле семинарсенчен пĕри, сăмахран, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кĕчкейри сакăр çул вĕренмелли шкулта ĕçленĕ. Ана Г. Мартьянов учитель ертсе пынă. Занятисем аслă шкулсенчи 24 сехетлĕ программăпа пулса иртнĕ, вĕсенче, кунсăр пуçне, «Наука и религия», «Наука и жизнь» тата ытти журналсенчи тĕне хирĕçле уйрăм статьясене сӳтсе явнă. Семинара çӳрекенсем пурте халăх хушшинчи атеизмлă ĕçе хастар хутшăннă. Совхозăн пĕр уйрăмĕнче вĕсем «Атеист» стена хаçачĕ кăларса тăма тытăннă. Упакассинчи, Сĕнтĕрпуçĕнчи сакăр çул вĕренмелли, Хуракассинчи тата Шуршăлти вăтам шкулсенче йĕркеленĕ теорилле семинарсем те хăйсен ĕçне ăнăçлă вĕçленĕ. Çапла вара, ку районта теорилле семинарсем атеизма пропагандăламалли тата наукăллă атеизм кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлемелли лайăх форма пулса тăнă.

Наукăллă атеизма пропагандăламалли формăсенчен лекцисемпе докладсем тата калаçусем ытларах сарăлнă. 1969 çулта республикăра лекторсемпе докладчиксем пурĕ 5 931 лекци ирттернĕ. Ку вăл кашни ял пуçне вăтамран виçшер лекци пулать. Куславкка тата Йĕпреç районĕсенчи ялсенче тĕне хирĕçле лекцисене кашни уйăхрах вулаççĕ.

Анчах атеизма пропагандăлас ĕçре лекцисемпе чылай çĕрте питех те сахал усă кураççĕ-ха.

Тĕне хирĕç пыракан кĕрешӳре наукăллă-атеизмлă лекцисемпе докладсем тĕп вырăн йышăнса тăмалла. Вĕсем çутçанталăкпа общество аталанăвĕн закономерноçĕсене тĕплĕн çутатса пама, тĕн пуçланса кайнин тата вăл халĕ те пĕтменнин сăлтавĕсене марксизм-ленинизм вĕрентнĕ пек ăнлантарса пама, тĕн юлашки-

Етёрне районёнчи Чирёккассинчи вăтам шкулта ёçлекен Д. А. Афанасьев учитель ял çыннисем хушшинче тёне хирёçле темăпа лекци вулать.

сене вирлё критиклеме, наукăпа техника тунă калама çук пысăк çитёнӳсене кăтартса пама пулăшаççё.

Юлашки çулсенче республикăри хаçат-журналсем, радиопа телевидени наукăллă атеизма пропагандăлас ёçе сарса ячёç. Халё ёнтё кёнеке магазинёсенче е библиотекăсенче тёне хирёç çырнă литературăна ытларах курма пулать. Библиотекăсенчен нумайăшё наукăллă атеизм литературине халăх хушшинче активлă пропагандăланине савăнсах палăртас килет. Пур библиотекăсенче те тенё пекех «Атеистсен кётесёсем» е атеизмлă кёнекесен çӳлёкёсем пур. Республикăри А. М. Горький ячёпе хисепленекен библиотека вара наукăллă-атеизмлă пёлӳсене халăх хушшине сарас тёлёшпе наукăллă-методикăллă центр пулса тăчё. Кунта вулакансен конференцийёсем, наукăллă-атеизмлă литературăна тишкёрсе тухнисем т. ыт. те час-часах пулса иртеççё.

Республикăри 857 массăллă библиотекăра упранакан наукăллă атеизм литературин фончё питё пысăк.

Çак фондпа пĕлсе усă курасси — пирĕн паянхи задача. Агитаторсем библиотекăсенче ĕçлекенсене ку тĕлĕшпе пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Вĕсенчен кашниех хаçат-журналсенчи тĕне хирĕçле статьясене, очерксемпе калавсене пĕрле пухăнса вулас ĕçе йĕркеleме, атеизмлă пропагандăра А. Пушкин, Т. Шевченко, А. Некрасов, Н. Гоголь, Л. Толстой, М. Горький, В. Маяковский тата чăваш писателĕсем — Иван Мучи, Краснов-Кĕçĕнни, Максимов-Кошкинский, К. Чулкаç, С. Лашман т. ыт. çырнă произведенисенчи сыпăксемпе усă курма пултарать.

Библиотекăра ĕçлекенсем лектор-атеистсемпе, агитаторсемпе тачă сыхăну тытни те наукăллă-атеизмлă пропагандăна тата анлăрах сарма май парать.

Юлашки вăхăтра наукăллă атеизм ыйтăвĕсене нумай тиражлă хаçатсемне стена хаçачĕсенче те лайăхрах çутатса тăма тытăнчĕç. Республикăри районсемпе хуласенче тухса тăракан хаçатсенче наукăллă атеизм ыйтăвĕсемпе çырнă статьясем чылай пичетленчĕç. Комсомольски районĕнче тухса тăракан «Октябрь ялавĕ» хаçатра, сăмахран, 1962 çултанпа «Атеистсен кĕтесĕ» пичетленсе пырать. Кунта пичетленекен материалсен тематикипе тĕллевĕсем анлă пулнине палăртмалла. Унта «Тĕнре чăнлăх çук», «Тĕн тĕттĕмлĕхĕнчен çăлăнасси» статьясене пичетленĕ, атеизмлă ĕçре усă курмалли формăсемпе майсене кăтартса панă. Хаçатра вырăнти авторсен тĕрлĕ жанрпа çырнă материалĕсене («Чиркĕве ăсатни» фельетон, «Атеистсен ĕç нумай» корреспонденци т. ыт. те) тăтăшах вулама пулать. «Атеистсен кĕтесĕнче» «Атеистсен словарĕсене», ваттисем тĕн пирки каланă сăмахсене пичетлени те пысăк пĕлтерĕшлĕ. «Октябрь ялавĕ» хаçат, çапла вара, районта наукăллă атеизм ĕçне организацилес тĕлĕшпе коллективлă пропагандист пулса тăрать.

Канаш хулипе районĕнче, Комсомольски, Патăрьел, Шупашкар, Элĕк районĕсенче тухса тăракан хаçатсем те халăха атеизмлă информаци парас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Анчах Куславкка тата Муркаш районĕсенчи хаçат страницисем çинче тĕне хирĕçле темăсемпе çырнă статьясем сайра хутра çеç пичетленеççĕ. Предприятисенчи, совхозсемпе уйрăм колхозсенчи нумай тиражлă хаçатсенче вара тĕне хирĕçле материалсем пачах та пичетленмеççĕ.

Атеизмлă ĕçе ăнăçлă туса пыма стена хаçачĕсем вăйлă пулăшни паллă ĕнтĕ. Канаш хулинче, Элĕк, Сĕнтĕрвăрри, Елчĕк районĕсенче стена хаçачĕсен уйрăм номерĕсене «Атеист», «Çамрăк атеист», «Турăсăр», «Атеист сасси» тата ытти ятсемпе ятарласа кăлараççĕ. «Пĕлӳ» обществăн Красноармейски районĕнчи Мăн Шетмĕри пуçламăш организацийĕ «Пĕлĕве — халăха» ятлă бюллетень кăларса тăрать. Кунашкал тĕслĕхсене татах та илсе кăтартма пулать.

Республикăри пур хуласемпе ялсене те радиофикацилени наукăллă-атеизмлă пĕлĕве пропагандăлас ĕçре радиопа анлăрах усă курма май парать. Элĕк, Патăрьел, Комсомольски, Тăвай районĕсенче вырăнти радио тăрăх атеизм ыйтăвĕсемпе передачăсем тăтăшах парса тăраççĕ. Комсомольски районĕнчи радиовещани, сăмахран, атеизмлă радиожурнал йĕркеленĕ. Кунта передачăсен планне, авторсене малтанах палăртса хураççĕ. Микрофон умĕнче опытлă атеистсем час-часах сăмах тухса калаççĕ. Районти ĕççыннисем юлашки вăхăтра «Турă», «атте турă» сăмахсем мĕне пĕлтереççĕ?», «Çулсене шутласси, календарь, уйăхсен, эрнесен, кунсен ячĕсем мĕнле пуçланса кайнă?», «Медицина, тĕн, вĕрӳçĕсем», «Мункун — иртнĕ саманаран юлнă сиенлĕ йăла», «Ислам праçникĕсемпе йăлисем» тата ытти нумай ыйтусемпе интереслĕ лекцисемпе калаçусем итленĕ. Элĕк районĕнчи вырăнти радиовещани те тăрăшса ĕçлет. Районти Пушкин ячĕпе хисепленекен, «Молния», Чапаев ячĕпе хисепленекен, «Гвардеец», Свердлов ячĕпе хисепленекен , «Таутово», «Мир», колхозсенче наукăллă атеизма вĕрентекен радиошкулсем ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Наукăллă-атеизмлă пĕлӳсене радиопа пропагандăлани ĕççыннисене коммунизмлă воспитани парас ĕçри пысăк пĕлтерĕшлĕ форма пулса тăрать. Унăн паха енĕ — ăна турра ĕненекенсем те, тĕн пирки иккеленекенсем те пĕр вăхăтрах итлеме пултарнинче. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн атеизмлă радиопередачăсен содержанийĕсен пахалăхĕшĕн çине тăрса ĕçлемелле.

КПСС Центральнăй Комитечĕ «Наукăлла пропагандăпа çутта кăлармалли пропаганда çинчен» йышăннă постановленире лекцисем вуланă е калаçусем ирттернĕ чухне тĕрлĕрен пособисемпе: диапозитивсемпе, ӳкерчĕксемпе анлă усă курма кирлине кăтартса панă.

Çак пособисем атеизмлă пропагандăна халăх хушшинче çивĕччĕн вăйлатма пулăшаççĕ.

Тĕне хирĕçле тата çутçанталăка наукăлла ăнлантаракан «Наукăпа тĕн», «Тĕн пуçланса кайни çинчен», «Çут тĕнче тытăнăвĕ», «Советсен искусственнăй спутникĕсемпе лунникĕсем», «Вырăссен чаплă художникĕсем тĕн çинчен» темăсемпе пухса хатĕрленĕ плакатсемпе альбомсене халăх хушшинче питĕ интересленсе пăхаççĕ. Чылай клубсемпе шкулсенчи краеведени музейĕсенче тĕне хирĕçле уйрăмсем е выставкăсем йĕркеленĕ.

Наукăллă-атеизмлă пропагандăра вырăссен чаплă художникĕсен И. Е. Репинăн, В. Г. Перовăн, А. А. Ивановăн, В. В. Пукиревăн тата ытти сен ӳкерчĕкĕсен репродукцийĕсемпе, чăваш художникĕн М. С. Спиридоновăн эскизĕсемпе («Чӳклени», «Вĕрӳçĕ» т. ыт. те) усă курни вырăнлă. Ку тĕлĕшпе чăвашсен изобразительнăй искусство деятелĕсем пысăк пулăшу параççĕ.

В. И. Ленин наукăллă-атеизмлă пропагандăра кинопа анлă усă курма кирлине нумай хутчен кăтартса панă, «тĕне хирĕçле пропагандăна туса пыма çутçанталăкпа историе наукăлла тĕпчесе фильмсем ӳкерсе хатĕрлеме» сĕннĕ [1].

Ленин кăтартса хăварнисем халĕ пурнăçа кĕнĕ. Тĕне хирĕçле вуншар фильм, çĕршер диафильм шутланаççĕ.

Чаплă ученăйсемпе тĕпчевçĕсем Павлов, Сеченов, Мичурин, Миклухо-Маклай, Пржевальский тата ытти сем çинчен ӳкерсе хатĕрленĕ илемлĕ фильмсем атеизмлă ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕсем материализмлă мировоззрение ăнланса илме, çутçанталăка наука вĕрентнĕ пек тĕпчесе пĕлессишĕн кĕрешнине курма пулăшаççĕ.

Халĕ наукăллă атеизма пропагандăлас ĕçре пур çĕрте те тенĕ пекех кинофильмсемпе, диафильмсемпе анлă усă кураççĕ. Улатăр районĕнче, сăмахран, наукăллă атеизма пропагандăлакан 13 кинолектори ĕçлет. Чылай çĕрте атеизмлă кинофильмсемпе диафильмсене ушкăнпа пухăнса сӳтсе явассине, куракансен конференцийĕсене йĕркеленĕ.

---

[1] В. Д. Бонч-Бруевич. Владимир Ильич Октябрь хыççăнхи пĕрремĕш çулсенче. «Ленин çинчен аса илнисем», М., 1955, 122 стр.

Ку таранччен эпир наукăллă атеизма пропагандăлас ĕçре усă куракан уйрăм формăсемпе майсем çинче чарăнса тăтăмăр. Кунашкал формăсем сахал мар. Вĕсем атеизмлă воспитани ĕçĕнче тĕп енсем пулса тăраççĕ.

Наукăллă атеизм пропагандин ыйтăвĕсене татса парас ĕçре лекторсемпе докладчиксем, статьясемпе кĕнекесен авторĕсем, атеизмлă хаçатсемпе журналсен редакторĕсем, хаçат, радио тата телевидени корреспонденчĕсемпе режиссерĕсем тата ыттисем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем, вырăнти фактсемпе усă курса, наукăллă-атиезмлă информаци пухаççĕ, ăна тĕрлĕ информациллĕ каналсем тăрăх массăсене пĕлтереççĕ. Çапла вара, ĕçри ăнăçу, атеизмлă информацие халăх хушшине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа çитересси йăлтах пропагандистсенчен, вĕсен теорипе политика шайĕнчен килет.

Атеизмлă воспитани ĕçĕн тепĕр енне эпир условнă массăллă-атеизмлă ĕç формисем тесе ят патăмăр. Вĕсен шутне тематикăллă вечерсем, ыйтусемпе ответсен каçăсем, турра ĕненнме пăрахнă çынсемпе тĕлпулусем ирттерни, атеизмлă художествăллă пултарулăх кружокĕсем, атеистсен слечĕсем, эрнисем, кунĕсем т. ыт. те кĕреççĕ. Ку ĕçсене ирттерес тĕлĕшре атеистсен опыт сахал мар. Акă, сăмахран, Канаш, Елчĕк тата ытти хăшпĕр районсенчи обществăллă организацисем тематикăллă вечерсем, ыйтусемпе ответсен каçăсем тăтăшах ирттереççĕ, художествăллă пултарулăх коллективĕсен концерчĕсене йĕркелеççĕ, атеизмлă спектакльсем лартса параççĕ, çĕнĕ йăла-йĕркесене халăх хушшинче сараççĕ.

Совет çыннисен пурнăçне çĕнĕ праçниксемпе йăласем кĕрсе пыраççĕ. Шупашкарти Мăшăрланакансен керменĕнче юлашки çулсенче пилĕк пине яхăн çемье мăшăрланнă. Çавна май хулари чиркĕве кайса венчет тăвакансен шучĕ пĕр процента яхăн юлнă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл, Кукашни, Çатракасси, Хуракасси, Шĕнерпуç тата ытти ял Совечĕсенче çĕнĕ йăла-йĕркесем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Районĕпе илсен, кунта 1969 çулти 9 уйăхра çуралнă 440 ачаран 206-шне, мăшăрланнă 199 çемьерен 18-шне çĕнĕлле регистрациленĕ. Паллах, ку сахал ĕнтĕ. Анчах çĕнĕ йăласем пурнăçа кĕрсе пыни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Халĕ



Шупашкарти Мăшăрлану керменĕнче.

республикăри уйрăм ял Совечĕсенче гражданла актсене те йăлтах çĕнĕлле тăваççĕ.

СВБ организацийĕсен ĕçри опычĕсене пăхса тухни пире массăллă мероприятисем: атеистсен конкурсĕсене, слечĕсене, митингĕсене, эрнисемпе кунĕсене ирттерме кирлине кăтартса парать. Паллах, çак асăннă мероприятисенчен хăшĕ-пĕрисене халĕ те ирттерме пулать. Сăмахран акă, атеистсен конкурсĕсемпе слечĕсене илер. Çакнашкал слетсенчен пĕрне Шупашкарта ирттернĕ. Ку вăл хулари çамрăк атеистсен слечĕ пулнă. Унта 500 çамрăк атеист ытла пухăннă. Слета фанфаристсем уçнă. Чи малтанах шкулсенчи çамрăк атеистсен клубĕсемпе кружокĕсен рапорчĕсене итленĕ. Ун хыççăн конкурсра малти вырăна йышăннă атеизмлă художествăллă пултарулăх кружокĕн членĕсем сцена çине тухнă.

Слетра атеизм темипе ӳкерчĕксем тăвас, сочинениесем çырас, çамрăк атеистсен клубĕсемпе кружокĕсен ĕçне лайăхрах йĕркелес тата хулари çамрăк атеистсенчен чи лайăххине палăртас тĕлĕшпе пынă конкурссен итогĕсене ирттернĕ.

Кунашкал слетсене Комсомольски, Муркаш тата

ытти районсенчи чылай шкулсенче те ирттернĕ. Çакăн пек мероприятисене пиншер çамрăк хутшăннă.

Атеизмлă пропагандăри çак формăсем пирĕн кулленхи ĕçре тĕп вырăнсенчен пĕрне йышăнса тăмалла. Ку ĕçри ăнăçу чи малтанах лекторсемпе агитаторсенчен, наукăллă-атеизмлă ĕçĕн организаторĕсенчен нумай килет. Вĕсен шутне партипе комсомол комитечĕсен членĕсем, культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче ĕçлекенсем, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенчи аслă классенче вĕренекенсемпе унта ĕçлекен учительсем, аслă шкулсенчи тата техникумсенчи студентсем, совет органĕсенче ĕçлекенсем т..ыт. те кĕреççĕ. Çак çынсен ĕнтĕ, халăх хушшинче наукăллă-атеизмлă ĕçе планласа, палăртнă мероприятисене пурнăçа кĕртсе пыма тивет.

Çавăнпа та ку категорири атеистсене вĕрентсе хатĕрленĕ чухне теориллĕ проблемăсемпе пĕр вăхăтрах атеизмлă мероприятисене хатĕрленсе ирттермелли ĕçĕн методикине вĕрентесси çине те тимлĕ пăхмалла. Обществăллă организацисен атеизмлă вĕрентӳре кирлĕ методикăллă литературăна, сценарисен текстĕсене çителĕклĕ уйăрса памалла, атеизмлă ĕçри малта пыракан опыта анлă сармалла. Лекторсемпе пропагандистсен яланах атеизмлă ĕçе йĕркелекенсен çывăх юлташсем пулса тăмалла.

Атеизмлă воспитани ĕçĕнчи виççĕмĕш ен вăл — турра ĕненекенсемпе тĕн пирки иккĕленекенсем хушшинче уйрăммăн ĕçлесси. Ку ĕçе Элĕк, Комсомольски, Сĕнтĕрвăрри тата ытти хăшпĕр районсенче лайăх йĕркеленĕ. Опыт кăтартса панă тăрăх, турра ĕненекенсемпе тĕн пирки иккĕленекенсем хушшинче уйрăммăн ĕçлени пысăк усă парать. Комсомольски районĕнче турра ĕненекенсем хушшинче çапла уйрăммăн ĕçленĕ хыççăн, сăмахран, А. Маков, И. Тимофеев, И. Кондратьев, Д. Старшов (Шурут ялĕ), В. Будаков, Е. Ишмуратова, В. Прокопьев, П. Изыков («Россия» колхоз) чиркӳри «çирĕм çын» шутĕнчен тухса кайнă. Кунашкал тĕслĕхсем Элĕк районĕнче те сахал мар. Тĕслĕхрен, Л. Патрикеев политинформатор Тавăт ялĕнчи Албутов ватă колхозникпа нумайччен ĕçленĕ. Калаçусемпе дискуссисем чылай ирттернĕ хыççăн Албутов хăйĕн йăнăшĕсене ăнланса илнĕ, халăх умĕнче тĕне ĕненме пăрахни çинчен пĕлтернĕ, кун пирки районти

хаçатра та çырса кăларнă. Ку районти И. Прокопьев (Ехремкасси), Н. Воронов («Молния» колхоз), М. Иванова (Свердлов ячĕпе хисепленекен колхоз), Трофимова тата Александрова («Молния» колхоз) колхозниксем те тĕне ĕненме пăрахнă.

Çапла ĕнтĕ, турра ĕненекенсемпе тĕн пирки иккĕленекенсем хушшинче çине тăрса чăтăмлăн ĕçлени ăнăçусем тума май парать.

Пирĕн ума ирĕксĕрех çакăн пек ыйту тухса тăрать: атеизмлă ĕçре вĕсем ку ăнăçусене мĕнле майпа тума пултарнă-ха? Паллах ĕнтĕ, тĕне ĕненекенсем хушшинче уйрăммăн ĕçлессин опычĕ пирки сахал мар çырнă [1]. Уйрăммăн ĕçлессин теорийĕпе методикин ыйтăвĕсене вĕренесси çинче чарăнса тăмасăр, пирĕн атеистсен кадрĕсем пирки пĕр-икĕ сăмах калас килет.

Кĕнеке пуçламăшĕнчех эпир пирĕн республикăра тĕне ĕненекенсен йышĕ халлĕхе чылай пысăк пулнине палăртнăччĕ. Турра ĕненекенсемпе тĕн пирки иккĕленекенсем хушшинче уйрăммăн ĕçлеме пирĕн вăй çитет-и-ха? Паллах, çитет. Республикăра 14 пине яхăн учитель, 6 пин ытла медицина работникĕ, пиншер ялхуçалăх специалисчĕсем, инженерсемпе техниксем т. ыт. те ĕçлеççĕ. Ĕçе пĕлсе йĕркелесен, пирĕн общественность турра ĕненекен е тĕн пирки иккĕленекен кашни çынпа уйрăммăн ĕçлеме май тупатех.

Турра ĕненекенсемпе ĕçлессине производствăра çеç мар, уйрăм килсенче те йĕркелемелле. Ку пархатарлă ĕçе пĕлӳ çителĕклĕ илнĕ çемьери ытти членсене, студентсемпе аслă классенче вĕренекенсене, кӳршĕсене тата учительсене явăçтармалла.

Çапла ĕнтĕ, эпир массăсем хушшинчи атеизмлă ĕçри тĕп енсемпе формăсене пăхса тухрăмăр. Юлашкинчен вĕсене çакнашкал схемăпа кăтартса пама пулать (69-мĕш стр. схемăна пăхăр).

Атеизмлă воспитани ĕçне ăнăçлă тăвас пулсан, пур енсемпе тата формăсемпе те усă курмалла. Кунашкал мероприятисене активлă атеистсем те, индифферентлисем те çӳреççĕ, сайра хутра турра ĕненекенсем те пыраççĕ.

Çапла ĕнтĕ, эпир тĕн сĕрĕмпе кĕрешмелли формă-

---

[1] «Уйрăммăн ĕçлесси» ятлă кĕнекене вулама сĕнетпĕр, «Мысль» издательство, 1968. *Ред.*



семпе майсене пăхса тухрăмăр. Ку ĕçре ăнăçлăх тăвасси чи малтанах парти организацийĕсем атеизм ĕçне тĕрĕс организациленинчен килет.

Атеизмлă ĕçе тишкĕрни КПСС Центральнăй Комитечĕ «Халăха наукăллă-атеизмлă воспитани парас ĕçе вăйлатасси çинчен» постановлени йышăннă хыççăн парти организацийĕсем ку ĕçе чылай лайăхлатнине кăтартса парать. КПСС Канаш райкомĕ ку ыйтăва пленумра ятарласа сӳтсе явнă, атеизмлă ĕçе лайăхлатмалли мероприятисем çирĕплетнĕ. Партин Канаш хула комитечĕн, Сĕнтĕрвăрри, Йĕпреç районĕсенчи комитечĕсен бюровĕсем пуçламăш парторганизацисен отчечĕсене сӳтсе явнă.

Пуçламăш парторганизацисем те хăйсен бюровĕсемпе комитечĕсен канашлăвĕсенче, парти пухăвĕсенче атеизмлă ĕçе лайăхлатасси çинчен ятарласа ыйту сӳтсе явнă. Çаксем вĕсем, паллах, общественноçăн наукăллă-атеизмлă ĕç тимлĕхне чылай ӳстернĕ.

Юлашки вăхăтра партин нумай организацийĕсем халăх хушшинчи атеизмлă ĕçĕн центрĕсем пулса тăчĕç. Ку ĕçе йĕркелесе пыма чылай çĕрте советсем туса хунă. Вĕсем наукăллă-атеизмлă воспитани ĕçĕнче государствăн тата общественноçăн пур организацийĕсене те — профсоюзсене, комсомола, «Пĕлӳ» обществине, культурăпа çутĕç учрежденийĕсене, шкулсене, хĕрарăмсемпе пенсионерсен совечĕсене пĕрлештерсе тăраççĕ.

Ĕççыннисене атеизмлă воспитани парас ĕçре, паллах, кадрсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Идейăпа теориллĕ ĕçĕн ăнăçлăхĕ, унăн анлăшĕ лайăх кадрсем пулнинчен килет. Çакна партин чылай организацийĕсен опытĕнчен курма пӳлать.

Шупашкарти резина-техника изделийĕсен заводĕн-

чи партком юлашки çулсенче атеистсен кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Партком сумĕнче атеистсен советне туса хунă, вăл пĕтĕм атеизмлă ĕçе йĕркелесе тăрать. Совет цехсенче тĕне хирĕçле ĕçе туса пыма 12 организатор, 40 лектор, агитатор тата политинформатор пухса хатĕрленĕ. Лекторатеистсем 1969 çулта 42 лекци ытла вуласа панă. Агитаторсемпе политинформаторсем те наукăллă атеизм ыйтăвĕсемпе калаçусем, политинформацисем чылай ирттернĕ.

КПСС хула комитечĕсемпе райкомĕсем наукăллă атеизм кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе ĕç планĕсем туса хатĕрленĕ, 1969—1970 вĕренӳ çулĕнче пур хуласемпе районсенче те наукăллă атеизм ĕçне организацилекенсен тата лектор-атеистсен çулталăкăх шкулне йĕркеленĕ.

Атеистсен кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçе пысăк тимлĕхпе туса пымалла. Халиччен вĕсене хатĕрлес тĕллевпе йĕркеленĕ система çителĕклĕ ĕçлеймен. Ку ыйтăва татса пама пирĕн мĕнле ĕçлемелле-ха? Малтанах кадрсем пирки калаçмалла.

Хальхи вăхăтра обществăллă организацисенче икĕ тĕрлĕ кадрсем — наукăллă-атеизмлă асăлă пĕлӳ илнĕ атеистсем тата асăлă шкулсенчи программăсем тăрăх вĕреннĕ вăтам пĕлӳллĕ атеистсем пур. Çапла вара, пирĕн икĕ пысăк ыйтăва татса памалла: атеистсене ятарласа хатĕрлемелле, халăх хуçалăхĕнче пур специалистсене те атеизмлă пĕлӳсем памалла.

КПСС Центральнăй Комитечĕ 1964 çулхи январĕн 2-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх çĕршыври асăлă шкулсемпе техникумсенче вĕренекенсене атеизмлă пĕлӳ пама тытăннă. Çапла вара, асăлă шкулсемпе техникумсенчен вĕренсе тухакансем пурте халăх хушшинче атеизмлă ĕçе туса пыма вĕреннĕ. Çак çамрăк çынсенчен нумайăшĕ халĕ производствăна ертсе пырать. Анчах вĕсем идеологи фронтĕнчи пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçе — тĕне хирĕçле ĕçе хаклама, наукăллă-атеизмлă ĕçе йĕркелеме пĕлмеççĕ, ку ĕçе хутшăнмаççĕ.

Халăх хуçалăхĕнчи специалистсене атеизмлă пĕлӳ пама, пирĕн шутпа, çакăн пек ĕçсем туса ирттермелле: наукăллă атеизма вĕренмелли шкулсемпе кружоксен, теориллĕ семинарсен шутне ӳстермелле, совет органĕсенче, культурăпа çутĕç организацийĕсенче тата шкул-

сенче ĕçлекенсем валли ялан ĕçлекен семинарсем йĕркелемелле.

Пысăк пĕлӳллĕ атеистсем хатĕрлес тĕлĕшпе те çине тăрса ĕçлемелле. Çĕршыври университетсенчи историпе философи факультечĕсенче халĕ 470 сехетлĕ программăпа атеизм никĕсĕсене вĕрентеççĕ. Ку вăл пысăк пĕлӳллĕ атеистсем вĕрентсе хатĕрлеме май парать. Чăвашсен И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленсе тăракан университетĕнче, философи кафедри пулнă май, профессорсен вăйĕпе пирĕн аспирантура урлă пысăк квалификациллĕ атеистсем вĕрентсе хатĕрлеме май пур. Кунта историпе тата наукăллă атеизмпа кандидатсен экзаменĕсене йышăнас ĕçе йĕркелесен, аван пулнă пулĕччĕ.

Атеистсен кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлесси — государствăллă тата обществăллă мĕнпур организацисен тивĕçĕ.

* * *

ССР Союзĕнче атеизмлă ĕç наукăпа техника тата культура вăйлăн аталаннă тапхăрта пулса пырать. Пирĕн ĕмĕр пур енчен те турра хирĕçле. Акă мĕншĕн эпир халăха тĕнрен çăлма пире пурнăç хăй, паянхи наукăпа техника пулăшса тăраççĕ, тетпĕр.

«Коммунизмшăн пыракан кĕрешӳре чи пысăк пĕлтерĕшли вăл идеологиллĕ ĕçре палăрнă ĕçри воспитани пулса тăрать»,— тенĕ КПСС Центральнăй Комитечĕ «Партин хальхи условисенчи пропаганди çинчен» йышăннă постановленире.

Коммунизм строительствин чаплă задачисене пурнăçланă май, обществăна çĕнетсе урăхлатас, çутçанталăка пăхăнтарас ĕçре совет çыннисем калама çук пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Атомпа усă курни, тĕнче уçлăхне вĕçни, Çĕрĕн, Хĕвелĕн тата Уйăхăн искусственнăй спутникĕсем, реактивлă авиацине ракетăллă техника пысăк хăвăртлăхсемпе аталанни тĕн ĕшмĕшлĕхне йăлтах аркатаççĕ.

Пирĕн паянхи пурнăç йăлтах тĕне хирĕçле.

ТУПМАЛЛИ

	Стр.
Умсăмах	3
Атеизм çĕнтерĕвĕн тапхăрĕсем	5
Кашни çынпа уйрăммăн ĕçлемелле	15
Тĕне хирĕç кĕрешес ĕçри хăшпĕр уйрăмлăхсем . .	23
Хăшпĕр çынсем мĕне ĕненеççĕ?	25
«Чун» тата «леш тĕнче» пур-и?	35
Авалхи тĕн йăлисен юлашкисем	44
Атеизмлă воспитание йĕркелесси çинчен . . .	54
Тĕшмĕше мĕншĕн ĕненеççĕ?	—
Ĕçре пур формăсемпе меслетсемпе те усă курмалла	58

ГЕОРГИЙ ЕФРЕМОВИЧ КУДРЯШОВ

Религиозные предрассудки и борьба с ними

На чувашском языке

Редактор Е. М. Риванов
Художественный редактор М. А. Ильин
Технический редактор В. И. Павлова
Корректор А. К. Шашкина

НТ 24504. Сдано в набор 6/III-1970 г. Подписано к печати 3/IX 1970 г. Изд. № 17/69 г. Формат 84×108 1/32. Типогр. № 3. Физич. печ. л. 2,25. Усл. печ. л. 3,78. Учетно-изд. л. 3,47. Заказ № 1441. Тираж 2000 экз. Цена 12 коп.

Чувашкнигоиздат, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Управления по печати при Совете Министров Чувашской АССР
г. Чебоксары, Володарского, 5